Чебоксарская
Ц. Б. им. Горького
0

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1938 ФЕВРАЛЬ 18 ЕРНЕКУН
40 (4853)-мӗш №

ЧӐВАШ КОММУНӖ

20-мӗш ҫул тухать ● ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗпе Тӗпӗҫтӑвкомӗн хаҫачӗ ● Пӗр №-рӗ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСӖ:
Город Чебоксары,
ул. Володарского, 5, Дом Печати
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторӑн 0—67
Ред. заместителӗн 0—88
Редакци секретарӗн 4—40
Дежурнӑйӑн 6—23

„РСФСР Аслӑ Советне суйламали Положенине“ ҫирӗплетесси ҫинчен

Пӗтӗм Российӑн XVI-мӗш Созыври Ӗҫтӑвакан Тӗп Комитечӗн IV-мӗш ҫессийӗ йышӑннӑ

ПОСТАНОВЛЕНИ

Пӗтӗм Российӑ Ӗҫтӑвакан Тӗп Комитечӗ ҫапла йышӑнать:
„Российӑ Советлӑ Федеративлӑ Социалисӑмлӑ Республикӑн Аслӑ Советне суйламали Положенине“ ҫирӗплетес.

Пӗтӗм Российӑ Ӗҫтӑвакан Тӗп Комитет председателӗ **М. КАЛИНИН.**
Пӗтӗм Российӑ Ӗҫтӑвакан Тӗп Комитет секретарӗшӗн—
Пӗтӗм Российӑ Ӗҫтӑвакан Тӗп Комитет Президиумӗн членӗ **А. АРТЮХИНА.**

Мускав, Кремль.
1938 ҫулти февралӗн 16-мӗш.

РСФСР Аслӑ Советне суйламали ПОЛОЖЕНИ

I-мӗш сыпӑк

Суйлав системи

1 статйа. РСФСР Конституцийӗн 138 статйи тӑрӑх, РСФСР Аслӑ Советне депутатсене суйлавҫӑсем пурне те тивӗҫ, пӗртан тата тӳрех суйламала правапа вӑрттӑн сасӑласа суйлаҫҫӗ

2 статйа РСФСР Конституцийӗн 139 статйи тӑрӑх, депутатсен суйлавӗ пурне те тивӗҫле: РСФСР Республикӗн 18 ҫул тултарнӑ пур гражданӗсене те, мӗнле расӑпа национальнӑҫ пулнине, мӗнле тӗн тытнине мӗн чухлӗ вӗреннине, пӗр вырӑнта пурӑннипе пурӑнманнине, мӗнле социаллӑ сийрен тухнине, пурлӑхӗ мӗнлине тата ӗлӗк мӗн ӗҫпе пурӑннине пӑхмасӑр — ӑсран тухнисемсӗр тата судпа айӑпласа суйлав прависӗр хӑварнӑ ҫынсемсӗр пуҫне,—пурин те депутатсен суйлавне хутшӑнма та, РСФСР Аслӑ Советне суйланма та права пур.

3 статйа. РСФСР Конституцийӗн 140 статйи тӑрӑх, депутатсен суйлавӗ пӗртан: кашни гражданинӑн пӗр сасӑ пур; суйлавсенче пур гражданӗсем те пӗртан тивӗҫпе пулаҫҫӗ.

4 статйа. РСФСР Конституцийӗн 141 статйи тӑрӑх, хӗрарӑмсем суйлас тата суйланас правапа арҫынсемпе пӗртан усӑ кураҫҫӗ.

5 статйа. РСФСР Конституцийӗн 142 статйи тӑрӑх, Хӗрлӗ Ҫар ретӗнче тӑракан гражданӗсем суйлас тата суйланас правапа мӗн пур гражданӗсемпе пӗртан усӑ кураҫҫӗ.

6 статйа. РСФСР Конституцийӗн 146 статйи тӑрӑх, суйлав чухне кандидатсене суйлав округӗсем тӑрӑх тӑратаҫҫӗ.

II-мӗш сыпӑк

Суйлавҫӑсен спискисем

7 статйа. Суйлавҫӑсен спискине хуласенче ӗҫҫынни депутачӗсен хула Совечӗсем тӑваҫҫӗ, районсене пайланнӑ хуласенче—район Совечӗсем; йалсенче—ӗҫҫынни депутачӗсен йал (станица, хутӑр, кишлак, аул) Совечӗсем.

8 статйа. Суйлавҫӑсен спискисене пур гражданӗсене те,—суйлав прави пуррисене, спискӑсене тунӑ вӑхӑта ҫав Совет территорийӗнче (йалан йе вӑхӑтлӑха) пурӑнаканнисене, суйлав кунӗ тӗлне 18 ҫула ҫитнисене кӗртеҫҫӗ.

9 статйа Суйлавҫӑсен спискисене суд приговорӗсем тӑрӑх суйлав прависӗр хӑварнӑ ҫынсене, суд приговорӗнче суйлав прависӗр хӑварма кӑтартнӑ пӗтӗм срук хушшинче, ҫавӑн пекех тата саккун кӑтартнӑ йӗрке тӑрӑх ӑсран тухнӑ тесе шутланӑ ҫынсене кӗртмеҫҫӗ.

10 статйа. Суйлавҫӑсен спискисене кашни суйлав участки тӑрӑх алфавит йӗркипе, суйлавҫӑн хушаматне, йатне, ашшӗ йатне, миҫе ҫултине тата ӑҫта пурӑннине кӑтартса тӑваҫҫӗ те, ӗҫҫынни депутачӗсен Совечӗн председателӗпе секретарӗ алӑ пусаҫҫӗ.

11 статйа. Суйлавҫӑсене нихӑшне те пӗр суйлав спискине кӗртнинчен пуҫне урӑх спискӑна кӗртме йурамасть.

12 статйа. Ҫар чаҫӗсенче тата ҫар пӗрлешӗвӗсенче тӑракан суйлавҫасен спискисене командовани тӑвать, вӗсене командирпа ҫар комиссарӗ алӑ пусаҫҫӗ. Ҫарта ӗҫлекен мӗн пур ытти ҫынсене суйлавҫӑсен спискисене вӗсем пуранакан вырӑнсенче ӗҫҫынни депутачӗсен Совечӗсем кӗртеҫҫӗ.

13 статйа. Больницасемпе ача ҫуратмали ҫуртсем, санаторисем тата ытти сыватакан учрежденисем ҫумӗнче тӑвакан суйлав участкисенчи суйлавҫӑсен спискине чирлӗ гражданӗсене те тата суйлав кунӗнче дежурствӑра пулакан медицинӑ персоналне те кӗртеҫҫӗ.

Скарлатинӑ тата дифтери отделенисенче выртакан чирлӗ ҫынсем суйлава хутшӑнма пултараймаҫҫӗ.

14 статйа. Суйлав умӗн 30 кун малтан ӗҫҫынни депутачӗсен Совечӗ суйлавҫӑсен спискисене пурте пӑхса тухма кӑларса ҫакать йе ҫав спискӑсемпе Совет ҫуртӗнче паллашма суйлавҫӑсене май туса парать.

15 статйа. Суйлавҫӑсен тӗп спискисем ӗҫҫынни депутачӗсен тивӗҫлӗ Советӗнче тата ҫар чаҫӗсенче йе ҫар пӗрлешӗвӗсенче упранса тӑраҫҫӗ.

16 статйа. Суйлавҫӑсен спискине ҫырса пӗлтернӗ вӑхӑтпа суйлав кунӗ хушшинче суйлавҫӑ урӑх вырӑна куҫсан, кивӗ вырӑнти ӗҫҫынни депутачӗсен тивӗҫлӗ Совечӗ ӑна, Тӗп суйлав комиссийӗ йышӑннӑ формӑпа „сасӑлама права паракан удостоверени“ парать те суйлавҫӑсен спискинче—„тухса кайнӑ“ тесе паллӑ тӑвать; йаланлӑха йе вӑхӑтлӑха пурӑнма куҫнӑ ҫӗнӗ вырӑнта суйлавҫа, хӑй камне пӗлтерекен удостоверени, ҫавӑн пекех тата „сасӑлама права паракан удостоверени“ кӑтартсан, суйлавҫӑсен спискине кӗртеҫҫӗ.

17 статйа. Суйлавҫӑсен спискинче тӗрӗсмарлӑх пурри ҫинчен (спискӑсене кӗртменни, спискӑсенчен кӑларни, хушамата, йата, ашшӗ йатне пӑсса ҫырни, суйлав прави ӗр хӑварнӑ ҫынсене спискӑна тӗрӗс мар кӗртни ҫинчен) зайавлени спискӑсене ҫырса пелтернӗ ӗҫҫынни депутачӗсен Советне памала.

18 статйа. Ӗҫҫынни депутачӗсен Совечӗн ӗҫтӑвакан комитечӗ суйлавҫӑсен спискинчи тӗрӗсмарлӑхсем ҫинчен панӑ кашни зайавленийе виҫӗ кун хушшинче пӑхса тухма тивӗҫ.

19 статйа. Суйлавҫӑсен спискинчи тӗрӗсмарлӑхсем ҫинчен панӑ зайавленийе пӑхса тухнӑ хыҫҫӑн, ӗҫҫынни депутачӗсен Совечӗн ӗҫтӑвакан комитечӗ суйлавҫӑсен спискине йе кирлӗ тӳрлетӳсем кӗртме, йе зайавлени паракана унӑн зайавленине мӗн сӑлтавпа йышӑнманни ҫинчен ҫырнӑ справка пама тивӗҫ; ӗҫҫынни депутачӗсен Совечӗн решенийӗпе килӗшмесен, зайавлени паракан ҫын халӑх судне жалабӑ пама пултарать.

20 статйа. Халӑх сучӗ виҫӗ кун хушшинче, судӑн уҫӑ ларӑвӗнче, зайавлени паракана тата Совет представителне чӗнсе, спискӑри тӗрӗсмарлӑхсем ҫинчен панӑ жалабӑна пӑхса тухма тивӗҫ, хӑйӗн решенине ҫийенчех зайавлени паракана та, ҫаплах тата Совета та пӗлтерме тивӗҫ. Халӑх сучӗн решенийӗ татаклӑ.

III-мӗш сыпӑк

РСФСР Аслӑ Советне суйламали суйлав округӗсем

21 статйа. РСФСР Конституцийӗн 25 статйи тӑрӑх, РСФСР Аслӑ Советне РСФСР гражданӗсем суйлав округӗсем тӑрӑх суйлаҫҫӗ.

22 статйа. РСФСР Аслӑ Советне суйламали округ ҫак принципа пулать: округ пуҫне—150.000 ҫын. РСФСР Аслӑ Советне суйламали кашни суйлав округӗ пӗр депутат йарать.

23 статйа. РСФСР Аслӑ Советне суйламали суйлав округӗсене уйӑрассине РСФСР Аслӑ Совет Президиумӗ тӑвать.

24 статйа. РСФСР Аслӑ Советне суйламали суйлав округӗсен спискине РСФСР Аслӑ Совет Президиумӗ суйлавсен кунне палӑртса хунипе пӗр вӑхӑтра пичетлесе пӗлтерет.

IV-мӗш сыпӑк

Суйлав участкисем

25 статйа. Суйлав бюллетенӗсене илсе тӑма тата сасӑсене шутласа тухма РСФСР Аслӑ Советне суйламали суйлав округӗсене кӗрекен хуласемпе районсен территорийӗ суйлав участкисене пайланать.

26 статйа. Суйлав участкисене хуласенче ӗҫҫынни депутачӗсен хула Совечӗсем тӑваҫҫӗ, районсене пайланнӑ хуласенче—ӗҫҫынни депутачӗсен район Совечӗсем; йалти вырӑнсенче ӗҫҫынни депутачесен район Совечӗсем.

27 статйа. Суйлав участкисене уйӑрассине суйлавччен 45 кунран кайа йулмасӑр малтан тӑваҫҫӗ.

28 статйа. Йалсовет территорийӗ, унта пурнакансем икӗ пин ҫынран ытла мар пулсан, йалан пекех, пӗр суйлав участки пулса тӑрать; кашни станицӑра, йалта, кишлакра, аулра, унта пурнакансем 500 ҫынран пуҫласа 2000 ҫынран ытла мар пулсан—уйрӑм суйлав участки организацилеҫҫӗ.

Халӑх хисепӗ 500 ҫынран сахалрах, анчах 300 ҫынран сахал мар йалсенче йе йалсен ушкӑнӗнче, ҫавӑн пек йалсем суйлав участки центрӗнчен 10 километр ытла инҫетре пулсан, уйрӑм суйлав участкисем тума йурать.

29 статйа. Ҫурҫӗрпе хӗвелтухӑҫри инҫетри районсенче, вак йалсем ытларах ҫӗрте, суйлав участкисене 100 ҫынран сахал мар халӑх хисепӗпе организацилеме йурать.

Ҫурҫӗрти нацилӗ округсенче, ҫавӑн пекех тата сӑрт-туллӑ тата халӑх куҫса ҫӳрекен районсенче РСФСР Аслӑ Совет Президиумӗ ирӗк пани тӑрӑх, 100 ҫынран сахалрах, анчах 50 ҫынран сахал мар халӑх хисепӗпе суйлав участкисем организацилеме йурать.

30 статйа. Хуласем, промышленнаҫлӑ пунктсем ҫавӑн пекех йалсем тата йалсовет территорийе, унта пурнакансем 2.000 ытла шутланаҫҫӗ пулсан, суйлав участкисене пайланаҫҫӗ, пӗр суйлав участкинче пуранакансен хисепӗ 1.500—2.500 ҫын пулмала.

31 статйа. Ҫар чаҫӗсем тата ҫар пӗрлешӗвӗсем уйрӑм суйлав участкисем пулса тӑраҫҫӗ, вӗсенче суйлавҫӑсен хисепӗ 50-ран сахал мар тата 1.500 суйлавҫӑран ытла мар пулмалла, вӗсем чаҫсем йе ҫар пӗрлешӗвӗсем тӑракан вырӑнсенчи суйлав округне кӗреҫҫӗ.

32 статйа. Больницасенче, ача ҫуратмали ҫуртсенче, санаторисенче, инвалидсен ҫуртӗсенче суйлавҫӑсен хисепӗ 50-ран кайа мар пулсан, уйрӑм суйлав участкисем тӑваҫҫӗ.

Темиҫе корпуслӑ больницасенчи уйрӑм корпус ҫумӗнче, вӗсенче кашнинче 50 суйлавҫӑран сахал мар пулсан, суйлав участкисем тума йурать.

Уйрӑм суйлав участкисем туман больницасемпе сыватакан ытти учрежденисенче суйлав бюллетенӗсене суйлав комиссисен уйӑрнӑ членӗсем илме пултараҫҫӗ. Ун пек чухне больницасене уйрӑм суйлав йешчӗкӗсем параҫҫӗ.

33 статйа. Суйлавсен кунӗнче ишсе ҫӳрекен кимӗсем, вӗсенче суйлавҫӑсен хисепӗ 25-рен сахал мар пулсан, уйрӑм суйлав участкисем тума пултараҫҫӗ, вӗсем кимӗ ҫырӑннӑ выранти суйлав округӗсене кӗреҫҫӗ.

Инҫе кайакан, суйлав кунӗнче ҫул ҫинче пулакан пассажир пойӑсӗсем ҫинче, „сасӑлама права паракан удостоверени“ пур пассажирсенчен суйлав бюллетенӗсене илме, суйлав участкисем тӑваҫҫӗ.

V-мӗш сыпӑк

Суйлав комиссийӗсем

34 статйа. РСФСР Аслӑ Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен Тӗп суйлав комиссине обществӑллӑ организацисен тата ӗҫҫынни обществисен представителӗсенчен тӑваҫҫӗ, ӑна РСФСР Аслӑ Совет Президиумӗ суйлавсен кунӗ ҫинчен пичетлесе пелтернипе пӗр вӑхӑтра ҫирӗплетет.

35 статйа. Тӗп суйлав комиссине ҫаксенчен тӑваҫҫӗ: председател, председателӗн заместителӗ, секретар тата 12 член.

36 статйа. Тӗп суйлав комиссийӗ:

а) РСФСР пӗтӗм территорийӗнче суйлавсем пынӑ хушӑра „РСФСР Аслӑ Советне суйламали Положенийе“ ӗҫе тӗрӗс кӗртсе пынине сӑнаса тӑрать;

б) суйлав комиссийӗсем тӗрӗс мар тунисем ҫинчен панӑ жалабӑсене пахса тухать тата жалӑбасем тӑрӑх татаклӑ решени йышӑнать;

в) пичетсен, суйлав йешчӗкӗсен образецӗсене, „сасӑлама права паракан удостоверенин“ формине, суйлав бюллетенӗсен тата вӗсене вальли конвертсен формипе тӗсне, суйлавҫӑсен списки формине, сасӑсене шутласа тухмали протоколан формине, суйланни ҫинчен паракан удостоверени формине туса парать;

г) РСФСР Аслӑ Советне суйланӑ депутатсене регистрацилет;

д) РСФСР Аслӑ Совечӗн Мандат Комиссине суйлавсен делопроизводствине парать.

37 статйа. РСФСР Аслӑ Советне суйламали кашни суйлав округӗнче РСФСР Аслӑ Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен округри суйлав комиссине тӑваҫҫӗ.

38 статйа РСФСР Аслӑ Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен округсенчи суйлав комиссийӗсене обществӑллӑ организацисен тата ӗҫҫынни обществисен представителӗсенчен тӑваҫҫӗ, вӗсене АССР Аслӑ Совет президиумӗсем, крайсен, облаҫсен, автономлӑ облаҫсен тата нацилӗ округсен ӗҫҫынни депутачӗсен Совечӗсем суйлавччен 55 кунран кайа йулмасӑр малтан ҫирӗплетеҫҫӗ.

39 статйа. РСФСР Аслӑ Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен Округри суйлав комиссине ҫаксенчен тӑваҫҫӗ: председател, председателӗн заместителӗ, секретар тата 8 член.

40 статйа. РСФСР Аслӑ Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен Округри суйлав комиссийӗ:

а) ӗҫҫынни депутачӗсен Совечӗсен тивӗҫ ӗҫтӑвакан комитечӗсем суйлав участкисене вахӑтра организациленине сӑнаса тӑрать;

б) суйлав участкисен йӗрке номерӗсене тӑвать;

в) суйлавҫӑсен спискисене вӑхӑтра тунине тата вӗсем ҫинчен пурне те пӗлтернине сӑнаса тӑрать;

г) РСФСР Аслӑ Советне суйлама РСФСР Конституцийӗ тата „РСФСР Аслӑ Советне суйламали Положени“ хушнисене пӑхӑнса тӑратнӑ кандидатсене регистрацилет;

д) участкӑри суйлав комиссийӗсене йышӑннӑ формӑллӑ суйлав бюллетенӗсем тата конвертсем парса тӑрать;

е) сасӑсене шутласа тухать тата округ тӑрӑх суйлав резульрачӗсене палӑртать;

ж) Тӗп суйлав комиссине суйлавсен делопроизводствине тӑратать;

з) суйланнӑ депутата суйлани ҫинчен удостоверени парать.

41 статйа. Участкӑри суйлав комиссине обществӑллӑ организацисен тата ӗҫҫынни обществисен представителӗсенчен тӑваҫҫӗ, вӗсене хуласенче ӗҫҫынни депутачӗсен хула Совечӗсем, районсене пайланнӑ хуласенче—ӗҫҫынни депутачӗсен районри Совечӗсем; йалти вырӑнсенче— ӗҫҫынни депутачӗсен районри Совечӗсем суйлавччен малтан 40 кунран кайа йулмасӑр ҫирӗплетеҫҫӗ.

42 статйа. Участкӑри суйлав комиссине ҫаксенчен тӑваҫҫӗ: председател, председател заместителӗ, секретар тата 2—6 член.

43 статйа. Участкӑри суйлав комиссийӗ:

а) суйлав участки тӑрӑх суйлав бюллетенӗсене илсе тӑрать;

б) РСФСР Аслӑ Советне депутата суйлама тӑратнӑ кашни кандидатшӑн панӑ сасӑсене шутласа тухать;

в) суйлавсен делопроизводствине Округри суйлав комиссине парать.

44 статйа. Тӗп суйлав комиссин, округсенчи тата участкӑсенчи суйлав комиссийӗсен ларӑвӗсем, вӗсенче пӗтем комиссии составӗн ҫурри ытла пулсан, тӗрӗс шутланаҫҫӗ.

45 статйа. Суйлав комиссийӗсенче пур ыйтусене те сасӑсен аҫаль ытларахӑшӗпе татса параҫҫӗ; сасӑсем пӗр тан пулсан, председател сасси ытларах тайӑ парать.

46 статйа. РСФСР Аслӑ Советне суйлас ӗҫри расхусем государства шутӗнчен пулаҫҫӗ.

47 статйа. Округсенчи тата участкӑсенчи суйлав комиссийӗсен Тӗп суйлав комиссийӗ ҫирӗплетнӗ образецлӑ пичет пур.

VI-мӗш сыпӑк

РСФСР Аслӑ Совечӗн депутатне суйлама кандидатсем тӑратас йӗрке

48 статйа. РСФСР Аслӑ Советне кандидатсем тӑратас права—РСФСР конституцийӗн 145 статйи тӑрӑх—обществӑллӑ организацисемпе ӗҫҫынни обществисене: коммунисла партийӗ организацийӗсене, професси союзӗсене, кооперативсене, ҫамрӑксен организацийӗсене, культурӑллӑ общиствӑсене тата саккун йӗркипе регистрациленӗ ытти организацисене тивӗҫлӗ.

49 статйа. Кандидатсем тӑратас правана обществӑллӑ организацисен тата ӗҫҫынни обществисен тӗпри органӗсем те, вӗсен республикӑсенчи, крайсенчи, облаҫсенчи тата районсенчи органӗсем те, ҫавӑн пекех предприйатисенче—рабочисемпе служащисен, ҫар чаҫӗсенче—красноармейцӑсен пӗрлехи пухувӗсем, ҫавӑн пекех тата колхозсенче—хресченсен, совхозсенче—совхоз рабочийӗсемпе служащисен пӗрлехи пухувӗсем пурнӑҫа кӗртеҫҫӗ.

50 статйа. Депутата суйлама тӑратнӑ кандидатсем РСФСР Аслӑ Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен Округри суйлав комиссийӗн, ҫавӑн пекех тата вӗсене депутата суйлама кандидата тӑратнӑ округри Участкӑри суйлав комиссийӗсен членӗнче тӑма пултараймаҫҫӗ.

51 статйа Суйлавччен 30 кун малтан, РСФСР Республикӗн Аслӑ Советне депутатсем суйлама кандидатсем тӑратакан обществӑллӑ организацисем йе ӗҫҫынни

(Йулашки 2-мӗш страницӑра).

РСФСР Аслă Советне суйламалли ПОЛОЖЕНИ

(Й У Л А Ш К И)

общиествисем пурте депутата суйлама тăратнă кандидатсене, РСФСР Аслă Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен тивĕçлĕ Округри суйлав комиссийĕнче регистрацилемеле.

52 статйа. РСФСР Аслă Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Округри суйлав комиссийĕсем обществăлă организацисемпе ĕçсынни обществисем РСФСР Конституцийĕ тата „РСФСР Аслă Советне суйламалли Положени" хушнисене пăхăнса тăрат нă кандидатсене пурне те регистрацилеме тивĕç.

53 статйа. РСФСР Аслă Советне депутата суйлама кандидатсем тăратакан обществăлă организаци йе ĕçсынни обществи Округри суйлав комиссине çак документсене тăратма тивĕç:

а) депутата суйлама кандидат тăратнă пуху йе лару президиум членĕсем алă пуснă, вĕсем миçе çултине, ăçта пурăннине, кандидат тăратнă организацин йатне, депутата суйлама кандидат тăратнă пуху йе лару ăçта, хăш вăхăтра, унта миçе çын пулнине кăтартса çырнă протокола, çавăнпа пĕрлех протоколра депутата суйлама тăратнă кандидатăн хушаматне, йатне, ашшĕ йатне, вăл миçе çултине, ăçта пурăннине, партилĕхне, мĕн ĕçпе пурăннине кăтартса çырмала;

б) депутата суйлама тăратнă кандидат вăл çав суйлав округĕнче хăйне тăратнă организацирен баллотировкăна тăма килĕшни çинчен зайавлени.

54 статйа РСФСР Аслă Советне депутата суйлама тăратнă кандидат пĕр округра кăна сасăланма пултарат.

55 статйа. РСФСР Округри суйлав комиссийĕ депутата суйлама тăратнă кандидата регистрацилеме йышăнманни çинчен икĕ кунлă срукра Тĕп суйлав комиссине жалăба пама пулат, Тĕп Суйлав Комиссийĕн решенийĕ татăклă пулса тăрат.

56 статйа. РСФСР Аслă Советне депутата суйлама регистрациленĕ кашни кандидатăн хушаматне, йатне, ашшĕ йатне, миçе çултине, мĕнле ĕçпе пурăннине, партилĕхне тата кандидат тăратнă организацин йатне Округри суйлав комиссийĕ суйлавччен 25 кун малтан пичетлесе пĕлтерет.

57 статйа. РСФСР Аслă Советне депутата суйлама ригистрациленĕ пур кандидатсене те суйлав бюллетенне обязательнă кĕртмеле.

58 статйа. РСФСР Аслă Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Округри суйлав комиссисен РСФСР Аслă Советне суйличчен 15 кун малтан суйлав бюллетенĕсене пичетлемеле те пур участкăри суйлав комиссисене те салатса памала.

59 статйа. Суйлав бюллетенĕсене суйлав округĕнче пурнакан халăх чĕлхипе пичетлеççĕ.

60 статйа. Суйлав бюллетенĕсене Тĕп суйлав комиссийĕ йышăннă формăпа тата пур суйлавçăсене те суйлав бюллетенĕсем пама çителĕклĕ чухлĕ пичетлеççĕ.

61 статйа. Округри суйлав комиссийĕнче регистрациленĕ кандидата тăратнă кашни организацине, çавăн пекех тата РСФСР кашни гражданинне, РСФСР Конституцийĕн 129 статйи тăрăх, çав кандидатшăн пухусенче, пичетре тата урăх майсемпе те ним чăрмавсăр агитацилеме права параççĕ.

VII сыпăк

Сасăлас йĕрке

62 статйа. РСФСР Аслă Советне суйласси пĕр кун хушшинче—пĕтĕм РСФС Республикĕпех пĕр кун пулса иртет.

63 статйа. РСФСР Аслă Советне суйлас куна РСФСР Аслă Совечĕн Президиумĕ суйлав срукĕччен 2 уйăх малтан палăртса хурат. Суйлав ĕçлемен кун пулса иртет.

64 статйа. Суйлав умĕнхи йулашки 20 кун хушшинче участкăри суйлав комиссийĕ кулленех суйлав кунĕпе суйлав ăçта пуласси çинчен пичетлесе йе мĕнле те пулин урăх майпа суйлавçăсене анлăн пĕлтерсе тăрат.

65 статйа. Суйлавçăсем сасă парасси суйлав кунĕнче вырăнти вăхăтпа ирхине 6 сехетрен пуçланса çĕрле 12 сехетчен пулса иртет.

66 статйа. Суйлав кунĕнче ирхине 6 сехетре Участкăри суйлав комиссийĕ председателĕ, унăн членĕсем умĕнче, суйлав йешчĕкĕсене тата йышăннă формăпа тунă суйлавçăсен списки пуррине тĕрĕслет, кун хыççăн йешчĕксене хупат те комиссийĕ пичечĕпе пичетлесе хурат, вара суйлавçăсене сасă пама тытăнма чĕнет.

67 статйа. Кашни суйлавçă хăй сасăлат, çавна тума сасăламалли çурта пырат, суйлавçăсем сасă парасси вара конверт ăшне хурса пичетленĕ суйлав бюллетенне суйлав йешчĕкне йанипе пулса иртет.

68 статйа Суйлав çуртĕнче бюллетене çырса тултарма уйрăм пÿлĕм уйăраççĕ, унта сасăланă вăхăтра, сасăлакансĕмсĕр пуçне урăх никамăн та, çав шутрах участкăри суйлав комиссийĕн членĕсен те, пулма йурамаст; бюллетене çырса тултармалли пÿлĕме пĕр вăхăтрах темиçе суйлавçă кĕртес пулсан, пÿлĕме хăмасемпе йе ширмăсемпе пĕр вăхăтра миçе суйлавçă кĕртнĕ хисеп тăрăх пÿлсе уйăрмала.

69 статйа. Суйлав çуртне пынă суйлавçă участкăри суйлав комиссин секретарне йе паспорт, йе колхоз кĕнеки, йе профсойуз билечĕ, йе вăл камне пĕлтерекен урăх удостоверени кăтартат, вара суйлавçăсен списки тăрăх тĕрĕсленĕ тата суйлавçăсен спискинче палла тунă хыççăн, йышăннă образецлă суйлав бюллетенĕ тата конверт илет.

70 статйа. Суйлав çуртне çак „РСФСР Аслă Советне суйламалли Положенин" 16-мĕш статйи тăрăх, „сасăлама права паракан удостоверенипе" пынă çынсене Участкăри суйлав комиссийĕ уйрăм спискăна çырса хурат, ăна суйлавçăсен списки çумне хураççĕ.

71 статйа. Суйлавçă, суйлав бюллетенĕсене çырса тултарма уйăрнă пÿлĕмре, суйлав бюллетенĕнче хăй камшăн сасăлат, çав кандидатăн хушаматне хăварат, ыттисене хуратса хурат, бюллетене конверт ăшне хурса, çыпăçтарса, суйлавçă Участкăри суйлав комиссийĕ вырнаçнă пÿлĕме куçат те, суйлав бюллетенĕ хунă конверта суйлав йешчĕкне йарат.

72 статйа. Хутла пĕлмен пирки йе пÿ-çири мĕнле те пулин çитменлĕх пирки хăйсем тĕллен суйлав бюллетенне çырса тултарма пултарайман суйлавçăсем, суйлав бюллетенне çырса тултармалли пÿлĕме кирек хăш урăх суйлавçа та суйлав бюллетенне çырса тултарма чĕнсе кĕртме пултараççĕ.

73 статйа. Суйлав çуртĕнче сасă панă вăхăтра суйлав агитацине тума йурамаст.

74 статйа. Суйлав çуртĕнчи йĕркелĕхшĕн комиссийĕ председателĕ ответлă пулса тăрат, унăн распорйаженийĕсем унта пынă çынсемшĕн пуриншĕн те обйазательнă.

75 статйа. Суйлав кунĕнче çĕрле 12 сехетре Участкăри суйлав комиссин председателĕ сасăсем парасси пĕтнĕ тесе пĕлтерет, вара комиссийĕ суйлав йешчĕкĕсене уçма тытăнат.

VIII сыпăк

Суйлав резуљтачĕсене палăртасси

76 статйа. Участкăри суйлав комиссийĕ сасăсене шутлакан çуртра, сасăсене шутланă чухне, обществăлă организацисен тата ĕçсынни обществисен йатарласа полномочи панă представителĕсен, çавăн пекех тата пичет представителĕсен пулма права пур.

77 статйа. Участкăри суйлав комиссийĕ, йешчĕксене уçса панă конвертсен хисепне сасăлама хутшăннă çынсен хисепĕпе танлаштарса тĕрĕслесе тухат те, тĕрĕслени резуљтачĕсене протокола çырса хурат.

78 статйа. Участкăри суйлав комиссин председателĕ конвертсене уçат те, Участкăри суйлав комиссин мĕн пур членĕсем умĕнче кашни бюллетен тăрăх сасăланин резуљтачĕсене каласа парат.

79 статйа. Депутата суйлама тăратнă кашни кандидат пуçне комиссийĕ секретарĕ тата Участкăри суйлав комиссин çав ĕçе тума полномочи панă членĕсем 2 екземпљар шутлав листи çырса пыраççĕ.

80 статйа. Бюллетенсене чăн мар тесе шутлаççĕ:

а) йышăнман образецлисене тата йышăнман тĕслисене;

б) конвертсăр йе йышăнман образецлă конвертпа панисене;

в) депутата суйламалли хисепрен ытларах кандидатсем панисене.

81 статйа. Суйлав бюллетенĕ тĕрĕсси пирки иккĕленÿ тухсан, ыйтăва участкăри суйлав комиссийĕ сасăласа татса парат, ун çинчен протоколра палла тăват.

82 статйа. Участкăри суйлав комиссийĕ сасăланин протоколне йышăннă формă тăрăх икĕ екземпљар çырат, вĕсем çине участкăри суйлав комиссийĕ членĕсем пурте, çав шутра председателĕпе секретарĕ обйазатељнă, ал пусаççĕ.

83 статйа. Сасăлани çинчен çырнă протоколра участкăри суйлав комиссин çаксене кăтартмала:

а) сасă пама пуçланă тата парса пĕтернĕ вăхăта:

б) суйлавçăсен списки тăрăх сасă панă суйлавçăсен хисепне;

в) „сасăлама права паракан удостоверени" тăрăх сасă панă суйлавçăсен хисепне;

г) панă конвертсен хисепне;

д) участкăри суйлав комиссийĕ панă зайавленисемпе жалăбăсенче мĕн çинчен каланисене кĕскен çырнине тата участкăри суйлав комиссийĕ йышăннă решенисене;

е) кашни кандидатшăн панă сасăсене шутланин резуљтачĕсене.

84 статйа. Сасăсене шутласа пĕтернĕ тата протокол çырнă хыççăн, комиссийĕ председателĕ комиссийĕн мĕн пур членĕсем умĕнче сасăланин резуљтачĕсене каласа парат.

85 статйа. Сасăлани çинчен участкăри суйлав комиссийĕ çырнă протоколăн пĕр екземпљарне, РСФСР Аслă Советне депутата суйлама тăратнă кандидатсен шутлав листисен икĕ екземпљарĕпе пĕрле, нарочнăйпа 24 сехет хушшинче РСФСР Аслă Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Округри суйлав комиссине йараççĕ.

86 статйа. Участкăри суйлав комиссийĕ председателĕн суйлав бюллетенĕсене пурне те (чăннисене уйрăмăн, тата чăн мар тесе йышăннисене уйрăмăн) участкăри суйлав комиссийĕн пичечĕпе пичетлесе хумала та, сасăлани çинчен çырнă протоколăн иккĕмĕш екземпљарĕпе пичете сыхласа усрама хуласенче—ĕçсынни депутачĕсен хула Советне; районсене пайланакан хуласенче — ĕçсынни депутачĕсен район Совечĕсене; йалти вырăнсенче—ĕçсынни депутачĕсен районри Совечĕсене памала.

87 статйа. Ĕçсынни депутачĕсен Совечĕсем суйлав бюллетенĕсене çав округ депутачĕсен мандачĕсене РСФСР Аслă Совечĕ çирĕплетиччен сыхласа усрама тивеç.

88 статйа. РСФСР Аслă Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Округри суйлав комиссийĕ сасăсене Участкăри суйлав комиссийĕсем тăратнă протоколсем тăрăх шутласа тухат.

89 статйа Округри суйлав комиссийĕ сасăсене шутлакан çуртра сасăсене шутланă чухне, обществăлă организацисемпе ĕçсынни обществисен йатарласа полномочи панă представителĕсем, çавăн пекех тата пичет представителĕсем пулма права пур.

90 статйа. Кашни кандидат пуçне Округри суйлав комиссийĕ икĕ екземпљар шутлав листи çырса пырат, унта депутата суйлама тăратнă кашни кандидат илнĕ сасăсен хисепне палла тăваççĕ.

91 статйа. Округри суйлав комиссийĕ сасăлани çинчен икĕ екземпљар протокол çырат, вĕсене Округри суйлав комиссийĕ членĕсем пурте, çав шутра председателĕпе секретарĕ обйазательнă, ал пусаççĕ.

92 статйа. Округри суйлав комиссин протоколĕнче çаксене кăтартмала:

а) Округри суйлавçăсен пĕтĕм хисепне;

б) сасăлама хутшăннă суйлавçăсен пĕтĕм хисепне;

в) депутата суйламалли кашни кандидатшăн панă сасăсен хисепне;

г) Округри суйлав комиссине панă зайавленисемпе жалăбăсенче мĕн çинчен каланисене кĕскен çырнине тата Округри суйлав комиссийĕ йышăннă решенисене.

93 статйа. Сасăсене шутласа тухнă хыççăн 24 сехетрен кайа хăвармасăр РСФСР Аслă Советне суйламалли Округри суйлав комиссийĕ председателĕ, протоколăн пĕрремĕш екземпљарне шутлав листисемпе пĕрле, пичетлесе, нарăчнăй урлă Тĕп суйлав комиссине йама тивĕç.

94 статйа. РСФСР Аслă Совечĕн депутатне суйламалли кандидат абсољутлă ытларах сасă илни, урăхла каласан, округра панă, чăн тесе йышăннă мĕн пур сасăсен çуррине ытларах илни, суйланнă шутланат.

95 статйа. Протокола алă пуснă хыççăн, РСФСР Аслă Советне суйламалли Округри суйлав комиссин председателĕ суйлавсен резуљтачĕсене каласа парат те, РСФСР Аслă Советне депутата суйланнă кандидата суйлани çинчен удостоверени парат.

96 статйа. Кандидатсенчен пĕри те абсољутлă ытларах сасă илмен пулсан, тивĕçлĕ Округри суйлав комиссийĕ çавăн çинчен протоколра уйрăм палла тăват те: Тĕп суйлав комиссине пĕлтерет тата кунпа пĕр вăхăтрах, чи нумайрах сасă илнĕ икĕ кандидата тепĕр хут баллотировкă тăвасси çинчен пĕлтерет, çавăн пекех тата çĕнĕрен баллотировкă тумалли куна, суйлавсен пĕрремĕш турĕ иртнĕ хыççăн икĕ ернерен кайа хăвармасăр, палăртса хурат.

97 статйа. Округра панă сасăсен хисепĕ çав округри сасăлама права пур суйлавçăсен çурринчен сахалтарах пулсан, РСФСР Аслă Советне суйламалли Округри суйлав комиссийĕ çавăн çинчен протоколра уйрăмăн палла тăват те, çийĕнчех Тĕп Суйлав Комиссине пĕлтерет, кун пек чухне вара Тĕп Суйлав Комиссийĕ пĕрремĕш суйлавсем хыççăн икĕ ернерен кайа хăвармасăр çĕнĕрен суйлав иртермеле тăват.

98 статйа. Депутата суйламалли кандидатсен тепĕр хут баллотировкине, çавăн пекех тата чăн мар тесе йышăннисен вырăнне çĕнĕ суйлавсене суйлавсем вађђи тунă суйлавçăсен списокĕсем тăрăх, тата пĕтĕмĕшпех çак „РСФСР Аслă Советне суйламалли Положени" тăрăх туса иртереççĕ.

99 статйа. Депутат РСФСР Аслă Совечĕн составĕнчен тухса ÿксен, РСФСР Аслă Совечĕн Президиумĕ 2 ернелĕ срукра, анчах депутат РСФСР Аслă Совечĕн составĕнчен тухнă хыççăн 2 уйăхран кайа хăвармасăр, РСФСР тивĕçлĕ суйлав округĕнче çĕнĕ депутат суйлавне иртермелли срука палăртат.

100 статйа. Кирек кама та, вăл пусмăрласа, улталаса, йунаса йе подкуп туса РСФСР гражданинне унăн РСФСР Аслă Советне суйлас тата суйланас правине пурнăçа кĕртме чарса тăрат пулсан, 2 çул таран срукláха хупса лартаççĕ.

101 статйа. Советăн ĕçлĕ çынни йе суйлав комиссин членĕ, суйлавра суйа документсем тунăшăн йе сасăсене йурийех тĕрĕс мар шутланăшăн—3 çул таран срукláха хупса лартаççĕ.

Пĕтĕм Российă Ĕçтăвакан Тĕп Комитет Председателĕ М. КАЛИНИН.

Пĕтĕм Российă Ĕçтăвакан Тĕп Комитет секретарĕшĕн—Пĕтĕм Российă Тĕпĕçтăвкомĕн Президиумĕн членĕ А. АРТУХИНА.

Мускав, Кремљ
1938 çулти февралĕн 16-мĕш.

Стахановла бригадăсем

ВĂРНАР. Пĕнер вăрманпунктинчи вăрман касакан Игнатйев йулташ бригади 6 çынран тăрат. Бригадă членĕсем пурте ăмăртса ĕçлеççĕ. Вĕсем нихăш кун та плана 110 процентран кайа йултармаççĕ. Акă çак йулашки кунсенче, стахановла уйăхлăх пуçлансан, бригадă кашни кунхи нормăна 120 процент тултарса ĕçлеме пуçларĕ.

Ĕç хыççăн рабочисем лайăх канаççĕ. Хватерсем аван. Музыкă инструменчĕсем çителĕклĕ. Патефон, балалайкă, шашкă-шахмăт, домино—çаксем пурте пур. Кунсăр пуçне тата Игнатйев йулташ рабочисене хаçатсем вуласа ăнлантарат, каласусем иртерет,

Çаракăри Чернышев йулташ йертсе пыракан бригадă та йулашки вăхăтра паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçлет. Бригадă кашни кунах 1916 штук йуман пĕренесене вартаса плана 150 процент тултарат.

Стахановла йухăм шоферсем хушшинче те сарăлсах пырат. Дормидонтов шоферăн куллен 19 кубла метр йăвăç турттармала, вăл 45—50 кубла метр турттарат. Йегоровпа Порфирйев йулташсем те нормăсене ытлашшипех тултараççĕ. Пурте вĕсем пĕр пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ.

Н. Скворцов.

Аван хатĕрленеççĕ

Шупашкарти Коммуналлă строительствă техникумĕнчи оборонă кружокĕсем хăйсен ĕçĕсене вăйлăн пуçарса йачĕç. Иртнĕ уйăхра Осоавиахим членĕсенчен „ПВХО" значокне 63 çын, „Ворошиловский стрелок" значокне 15 çын илчĕç. Халĕ пур студентсем те оборонă значокĕсене илессишĕн тăрăшаççĕ. 20 студент йубилей кунĕ тĕлне „Ворошиловский стрелок" значокне илме, 30 студент „ПВХО" значокне илме хатĕрленеççĕ.

Техникумра Ворошилов пек тĕл перекенсен ăмăртуне туса иртернĕ. Вĕсенчен чи лайăх тĕл перекенсем хулари ăмăртăва хутшăнса 3-мĕш вырăна тухнă. Техникумри чи лайăх тĕл перекенсем Белов 50 очкоран—47, Воскресенский—46 очко шерсе пивертнĕ.

Кунсăр пуçне техникумри 10 чи лайăх тĕл перекенсем РСФСР-чи Коммуналлă строительствă техникумĕсен заочнă пулса иртекен ăмăртуне хутшăннă.

Библиотекăра Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕн 20 çулхи ĕçĕсем çинчен выставкă организацилеме тытăннă.

Гер. Иванов.

Пĕтĕм Российă XVI-мĕш созыври Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕн IV-мĕш Çессийĕ хупăннă

Февралĕн 16-мĕшĕнчи йулашки лару

Февралĕн 16-мĕшĕнче ирхине Пĕтĕм Российă Тĕпĕçтăвкомĕн XVI-мĕш созыври IV-мĕш Çессин йулашки ларувĕ пулса иртнĕ. Лару председателĕ— М. И. Калинин йулташ. Н. А. Булганин йулташ доклачĕ тăрăх прениссенче тухса каласакансем РСФСР Аслă Советне суйламалли Положенин Çессире çирĕплетме тăратнă пройектне пурте, пĕр кăмăллă пулса ырланă.

Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕн секретарĕ С. Л. Брегман йулташ, РСФСР Аслă Совечĕн çывăх вăхăтра пулмалли суйлавĕсем халăхăн морађђĕ-политикăлă пĕрлĕхĕн никĕсĕ çине пулса иртĕç, вĕсем коммунистсемпе партире тăманнисен Сталинла блокне çĕнĕ çĕнтерÿ кÿрĕç, тесе калат.

Пĕтĕм Российă Тĕпĕçтăвкомĕн Краснодар крайĕ тăрăх ĕçлекен Оргкомитет председателĕ И. С. Богданов йулташ, халиччен пухăннă опытсене шута илсе, суйлавçăсен спискисене тăвас ĕç çине уйрăмăнах тимлĕн çавăрăнса пăхма, вăл спискăсен бланкисене вырăнсене вăхăтра йарса парассинĕн тăрăшма сĕнет.

— Контрреволюцилĕ троцкиссем, бухаринецсем тата халăхăн ытти тăшманĕсем шанчăк хурса тăнă Кубањ текех çук ĕнтĕ, вăл пулас та çук: Хаљ ĕнтĕ Кубањри колхозсенчи совет казакĕсем хура тăпрала уй-хирсенче тÿрĕ кăмăлпа ĕçлеççĕ, Сталин йулташ çулталăкра 7—8 мĕлйард пăт тĕштырă туса илесси çинчен панă кăтартува пурнăçа кÿртессишĕн кĕрешеççĕ. Тăшман хăйĕн сысна сăмсине хамăрăн совет пахчине пырса чикме хăйсассăн, Кубањ казакĕсем тăшмана хăйсен çĕрĕ çинчех çапса çĕмĕрĕç,—тет Богданов йулташ. Залра хĕрÿлĕн алă çупаççĕ.

РСФСР Социаллă обеспечени Халăх Комиссарĕ М. А. Шабурова йулташ, иккĕмĕш пиатилеткă çулĕсенче ССР Сойузĕ тăрăх пенси памашкăн кăна 6 мĕлйард та 250 мĕлйун тенкĕ укçа йанă, тесе пĕлтерет. Хаљхи вăхăтра РСФСР Социаллă обеспечени Халăх Комиссариачĕн çулталăкри бюджечĕ кăна пилĕк çĕршывăн— Швецин, Финљандин, Литван, Латвин тата Естонин çулталăкри государствă бюджечĕсемпе (вĕсене пĕр çĕре илсе шутласан) пĕртан.

Парторганизацисен, обществăлă организацисен умĕнче,— тет Горький облĕçтăвкомĕн председателĕ А. Н. Буров йулташ,—РСФСР Аслă Совечĕн суйлавĕсене кăтартулă лайăх иртерессине пурнăçа кĕртес задачă тăрат. Организацилĕ-техникăлă ыйтусем çине пит те пысăк тимлĕхпе çавăрăнса пăхас пулат. Суйлавçăсен спискисене тăвасси политикăлă пысăк ĕç пулса тăрат, вăл ĕçе тума, иртнĕ суйлав кампанинче хăшпĕр-уйрăм вырăнсенче пулнă пек иккĕмĕш вырăнта тăракан çынсене хушма йурамаст.

Пĕтĕм Российă Ĕçтăвкомĕн Президиум членĕ А. В. Артухина йулташ Совет Сойузĕнчи пир-авăр тĕртес ĕçри хĕрарăмсен хаваслă пурнăçĕ çинчен калат. Артухина йулташ производствăна йертсе пырас ĕçре хĕрарăм мĕнле вырăн йышăнса тăни çинчен калакан интереслă цифрăсем илсе кăтартат. Сойузра—100 пин ытла хĕрарăм-инженерсемпе техниксем. Пиравăр предприйатийĕсенче инженерла-техникăлла работниксем—хĕрарăмсем 20 процент хисеплеççĕ. РСФСР Аслă Советне суйлас задачăсем çинчен каласа, Артухина йулташ çакăн çине кăтартса парат: Конституцине тата суйлав саккунне вĕренес ĕçе организацилес пулат, çĕнĕ агитаторсен кадрĕсене ĕçе хутшăнтарас пулат, вырăнсенчи совет органĕсен ĕçне лайăхлатас пулат.

Çессин йулашки ларувĕнче тата Мордва АССР Тĕпĕçтăвкомĕн председателĕ М. А. Чембулатов йулташ, Ђалхуçалăх коммунисла аслă шкулĕн студентки А. И. Чужинова йулташ, Воронеж облĕçтăвкомĕн председателĕ Ватолин йулташ, Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ Спасов йулташ тухса калаççĕ.

Прениссенче чи йулашкинчен РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председател заместителĕ С. Б. Зодионченко йулташ тухса калат. РСФСР Аслă Советне суйламалли Положенине чăн-чăн демократилĕ саккун тесе хакласа, Зодионченко йулташ редакцилес йĕпе чылай асăрхаттарусем тăват. Унтан вăл аслă Российă Федерацин калама çук пысăк çĕнтерÿвĕсем çинчен, унăн халăх хуçалăхĕпе култури ÿсĕ-хĕррисĕр ÿсĕлнесе пыни çинчен калат.

Зодионченко йулташ сăмахĕ хыççăн Çесси прениссене чарса лартас тесе пĕр саслăн йышăнат. Докладчик Булганин йулташ, Зодионченко йулташ тÿрлетÿвĕсемпе хăй килĕшни çинчен пĕлтерет, РСФСР Аслă Советне суйламалли Положенин пройектне хаклас ĕçре Çесси йалтах пĕркăмăллă пулнине палла тăват.

Зодионченко йулташ сĕнсе панă тÿрлетÿсене Çесси йышăнат. Пройекта пĕр саслăн çирĕплетеççĕ.

„РСФСР Аслă Советне суйламалли Положенине" çирĕплетнĕ хыççăн, лару председателĕ М. И. Калинин йулташ, Пĕтĕм Российă Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕн IV-мĕш Çессийĕ хупăннă, тесе пĕлтерет.

(ТАСС).

Сљота çуракине лайăх хатĕрленнипе кĕтсе илетпĕр

Анат Кипекçĕри „Ĕмĕт" колхоз, иртнĕ çулта вăтам шутпа кашни гектартан 21 центнер тĕштырă туса илчĕ. Колхозра малта пыракан бригадăсем, опытниксем хăйсен участкисем çинчен татах та пысăк тупăшлă тырпул туса илнĕ.

Акă 2-мĕш бригадă 67 гектар çурă çĕр участкинчен гектартан 23 центнер, 1-мĕш бригадă 66 гектарлă участкă çинчен гектартан 22-шер центнер тĕштырă туса илнĕ. Иванов опытник хăйĕн участки çинчен 24 центнер тулă, сĕлĕ 28 центнер, вăрлăхлăх виккă 31 центнер, кĕрхи тулă 28 центнер, ыраш 31 центнер туса илнĕ. Çакăн пек вĕсен 1937 çулхи ĕçсен итогĕсем.

Колхозниксене 1937 çулта пысăк тухăçлă тырпул туса илни малала та пысăк тупăшлă тырпулшăн кĕрешме хавхалантарат. Вĕсем Краснодар крайĕнчи Шчербиновск районĕнчи колхозниксем чĕнсе каланине пысăк хастарлăхпа йышăнса хăйсен малала тумалли ĕçĕсене палăртса çирĕп план тунă.

Колхозăн кăçал 140 гектар тĕштырă, 12 гектар çĕрулми, 2 гектар вылăх кăшманĕ, 7 гектар кантăр акмала. Кунсăр пуçне 16 гектар кĕрхи тулă, 104 гектар ыраш пур. Çапла вара, колхоз кăçал пурĕ 260 гектар çинчен тĕштырă пухса кĕрет. Колхоз кăçал гектартан 250 центнер çĕрулми, 750 центнер вылăх кăшманĕ, 8 центнер кантăр вăрри туса илессишĕн кĕрешет.

Вĕсем пĕтĕм вăрлăха трийерпа суртласа хунă. Пĕрчĕлĕ тырăсене аллăпа суйлас ĕçе çак кунсенчех туса пĕтереççĕ.

Çуракине вăхăтра тата пысăк пахалăхпа иртерес тĕлĕшпе лашасене вăтам та лайăх ÿтлĕ тытаççĕ. Лашасене çураки вăхăтĕнче çитерме 180 центнер çăнăх хатĕрлесе хунă.

Иалхуçалăх машинисене, кÿлмели таврашсене, кăкармалли-çыхмалли пăйав-кантрасене те çителĕклĕ хатĕрленĕ.

Епĕр çуракине хатĕрленессипе „Пионер" колхозпа социалисăмла ăмăртăва тухнă. Шчербиновски районĕнчи колхозниксен чĕнĕвне йышăнса кăçал вăйла тырпул туса илессипе Çĕрпÿ районĕнчи пур колхозсене те хăйсем пек ĕçлеме социалисăмла ăмăртăва чĕннĕ.

Халĕ „Ĕмĕт" колхоз республикăри малта пыракан стахановецсемпе ударниксен сљотне çуракине хатĕрленсе çитнипе кĕтсе илет.

М. Ф. Скворцов.

Çĕрпÿ р. „Ĕмĕт" колхоз председателĕ.

„Чапайĕв" йачĕпе тăракан колхозăн куљтурлăхĕ ÿссех пырат

Çĕнйал-Чупай йалĕ (Çĕрпÿ р-нĕ) колхоз пуçланнăранпа йалтах çĕнелсе кайрĕ. Ĕлĕкхи вăхăтра йалта кантур çурчĕсĕр пуçне урăх нимĕнле куљтурлă çурт та пулман. Хаљ бољница тата туллимар вăтам шкул пур, советсен суйлав кампанийĕ тĕлне пысăк клуб туса лартрĕç. Çамрăксем час-часах спектакљ ем лартса параççĕ, нумай пулмасть драмă тата физкуљтурă кружокĕсем организацилерĕç. Клубра кулленех радио ĕçлет, каççерен радио итлеме нумай çынсем пухăнаççĕ, кунсăр пуçне нумай колхозниксем хăйсен килĕсене радио кĕртрĕç. Анчах çакна калас пулат, пĕлтĕртен пуçласа йалта пĕр хут çеç кино кăтартнă, колхозниксем тем пек ыйтаççĕ пулин те кино кăтартма пымаççĕ.

Колхоз 1937 çулта вăйлă тырпул туса илчĕ. Нумай колхозниксем (Белский Д., Кириллов М., Иванов Т. т. ыт. те) çĕнĕ, куљтурлă, пысăк пÿртсем лартрĕç. Кашни киле пĕрер екземпљартан кайа мар хаçат килсе тăрат.

П. Арисов.

Арапуçĕнчи вăрçăлă турăсăрсен кружокĕ

Арапус йалĕнче (Вăрмар р-нĕ) тĕне хирĕç кĕрешессине тивĕçлĕ вырăна лартнă. Кунта 50 çынтан вăрçăлă турăсăрсен кружокне организациленĕ.

Кружок членĕсем тĕне хирĕçле „Ураса" йатлă пйесăна выљăса кăтартрĕç.

Кунсăр пуçне колхоз çумĕнче тĕне хирĕçле кружок пур. Кружок колхозри активиссемпе стахановецсене пĕтĕçтерсе тăрат.

Кавалти вăрçăлă турăсăрсен кружокĕнче 86 член шутланат.

В. Алендейев.

Пӗтӗм Российӑн XVI-мӗш созыври Ӗҫтӑвакан Тӗп Комитечӗн IV-мӗш ҫессийӗ

„РСФСР Аслӑ Советне суйламали Положени“ пройекчӗ ҫинчен

РСФСР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн председателӗн Н. А. БУЛГАНИН йулташ доклачӗ

Йулташсем, Пӗтӗм Российӑ Ӗҫтӑвакан Тӗп Комитечӗн ҫак IV-мӗш Ҫессине „РСФСР Аслӑ Советне суйламали Положенине“ сӳтсе-йавма пухнӑ.

Пӗтӗм Российӑри Советсен Чрезвычайлӑ XVII-мӗш сиесӗ йышӑнни тӑрӑх Ҫессинче пӑхса тухма тӑратнӑ Республикӑн Аслӑ Совене суйламали Положенин пройектне пӗтӗмпех пирӗн Аслӑ Сталинла Конституци ачийӗ пулса тӑракан Российӑ Советлӑ Федеративлӑ Социалисӑмлӑ Республикӑн Конституцийӗпе килӗшӳлӗ туса хатӗрленӗ.

Пирӗн республикӑн Аслӑ Советне суйламали Положени Конституципе, РСФСР Конституцийӗпе, тунӑ суйлав йӗркине ним пӑркаланмасӑр пурнӑҫа кӗртсе пыма май памала.

„Ситес суйлавсем вӗсем, ахаль суйлавсем ҫеҫ мар,—тенӗ Сталин йулташ Мускав хулинчи Сталинский суйлав округӗнчи суйлав умӗнхи пухӑвӗнче каланӑ сӑмахра.—Вӑл чӑннипех пирӗн рабочисен, пирӗн хресченсен, пирӗн интеллигенцин пӗтӗм халӑх уйавӗ. Тӗнчере ҫавӑн пек чӑннипех ирӗклӗ, чӑннипех демократилӗ суйлавсем нихҫан та пулман-ха, нихӑҫан та. Истори ун пек пример урӑх пӗлмест. Ӗҫ кунта пирӗн суйлавсем пурне те тивӗҫ, пӗртан, вӑрттӑн, тӳремӗн пулассинче мар,—ку хӑйех те ӗнтӗ пит те пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Ӗҫ кунта пирӗн пурне те тивӗҫ суйлавсене тӗнчери кирек хӑш ҫӗршыври суйлавсемпе танлаштарсан та, вӗсенчен ытларах ирӗклӗ, ытларах демократилӗ иртернинче“.

„РСФСР Аслӑ Советне суйламали Положени“ аслӑ историлӗ документ—Сталинла Конституци никӗсӗ ҫинче тунӑ пирӗн Конституци ҫӳллӗшӗнче тӑмала.

„РСФСР Аслӑ Советне суйламали Положени“ ССР Сойузӗн Аслӑ Советне суйламали Положени, урӑхла каласан, Советлӑ Социалисӑмлӑ Республикӑсен Сойузӗн суйлав саккунӗпе килӗшӳлӗ пулмала. Сойузӑн суйлав саккунне пурнӑҫра тӗрӗсленӗ, мӗлйунлӑ совет граждӑнӗсемпе тӗрӗсленӗ. Ун никӗсӗ ҫинче Сойузӑн Аслӑ Совет суйлавне, тӗнчере тата етемлӗх историйӗнче чи демократилӗ суйлав иртернӗ. Вӑл, Советлӑ Социалисӑмлӑ Республикӑсен Сойузӗн ҫак саккунӗ, ССР Сойузӗн Конституцийӗпе пӗтӗмпех килӗшӳлӗ пулса тӑрать, вӑл Конституцийе Сталин йулташ туса панӑ. (Алӑ ҫупаҫҫӗ).

Пӗтӗм Российӑ Ӗҫтӑвакан Тӗп Комитечӗн ҫак Ҫессинче ҫирӗплетме тӑратнӑ „РСФСР Аслӑ Советне суйламали Положенин“ пройекчӗ ҫӳлте асӑннӑ кирлӗ йенсемпе килӗшӳлӗ пулса тӑрать-и-ха? Пӗтӗмпех килӗшӳлӗ.

Социалисӑмлӑ суйлав системипе РСФСР Аслӑ Совечӗн пулас суйлавӗсем

Положенин 1-мӗш статйинче ҫапла каланӑ: „РСФСР Конституцийӗн 138 статйи тӑрӑх, РСФСР Аслӑ Советнӗ депутатсене суйлавҫӑсем пурне те тивӗҫ, пӗртан тата тӳрех суйламала правапа вӑрттӑн сасӑласа суйлаҫҫӗ“.

Йулташсем! Капиталисла тӗнче „пурне те тивӗҫ“ суйлав саккунне ҫӗр ҫул хушши ытла пӗлсе тӑрать пулсан (анчах чӑннипе пурнӑҫра вӑл пӗр демократилӗ, буржуалӑ ҫӗршывӑн та ҫук) пирӗн республикӑн „Аслӑ Советне суйламали Положенин“ пройекчӗ (Сойузӑн суйлав саккунӗ пекех) депутатсене чӑннипех пурне те тивӗҫ суйлавпа суйламала тӑвать.

„РСФСР Аслӑ Советне суйламали Положенин“ 2-мӗш статйи ҫапла калать:

„РСФС Республикӗн 18 ҫул тултарнӑ пур граждӑнсен те, мӗнле расӑпа национальнӑҫ пулнине, мӗнле тӗн тытнине, мӗн чухлӗ вӗреннине, пӗр вырӑнта пурӑннипе пурӑнманнине, мӗнле социаллӑ сийрен тухнине, пурлӑхӗ мӗнлине тата ӗлӗк мӗн ӗҫпе пурӑннине пӑхмасӑр,—ӑсран тухнисемсӗр тата судпа айӑпласа суйлав прависӗр хӑварнӑ ҫынсемсӗр пуҫне,—пурин те депутатсен суйлавне хутшӑнма та, РСФСР Аслӑ Советне суйламата права пур“.

Малала. Положенин 4 мӗш статйинче йатарласа хӗрарӑмсен суйлав прави ҫинчен каласа панӑ. 5-мӗш статйара Рабочисемпе Хресченсен Хӗрлӗ Ҫарӗпе Тинӗсҫар флоче ретӗнче тӑракан ҫынсен суйлав прави ҫинчен каласа панӑ.

Ҫаксем вӗсем, йулташсем, пӗрре те „демократилӗ“ капиталисла ҫӗршывсен саккунӗ пек мар, унта пурне те тивӗҫлӗ суйлавсем ҫинчен чаплӑ сӑмахсемпе калаҫаҫҫӗ, анчах ӗҫре вӑл нихҫан та пурнӑҫа кӗмест.

Епӗр пӗлетпӗр, чылай капиталисла ҫӗршывсенче — Францире, Швейцарире, Йугославире, Болгарире, Грецире, Йапонире тата ытти капиталисла ҫӗршывсенче—хӗрарӑмсен суйлав прави пачах ҫук.

Капиталисла ҫӗршывсенче тата ҫар службинчи ҫынсене те суйлав прави памаҫҫӗ.

Чылай ҫӗршывсенче—Францире, Англире, Америкӑри Пӗрлешӳлӗ Штатсенче—хале те суйлав урнисем патне пыма кирлӗ чухлӗ пурлӑх тытакан ҫынсене ҫеҫ ирек параҫҫӗ.

Кунсӑр пуҫне, епӗр тата ҫакӑн пек фактсем те куратпӑр: Британин Индийе тата Англин пуҫпулса тӑракан ҫӗрӗсенче (доминионҫенче) тата колонисенче 400 мӗлйунлӑ халӑх хӑйсене вальли обйазательнӑ саккунсем кӑларакан парламент суйлавне хутшӑнмасӑр йулать.

Пур капиталисла ҫӗршывсенче те суйлавҫӑсене пӗр вырӑнта пурӑннине пурӑнманнине кура суйлав прави парас йӗрке пур, вӑл йӗрке тӑрӑх граждӑнсен суйлавсем пуличчен малтан тивӗҫлӗ вӑхӑт хушши пӗр вырӑнта пурӑнмала—Великобританипе Чехословакинче 3 уйӑх, Бельгипе Францинче 6 уйӑх, Америкӑри Пӗрлешӳлӗ Штатсенче 2 ҫултан пуҫласа 3 ҫула ҫитиччен т. ыт. те.

Пирӗн патӑмӑрта ҫеҫ ӗнтӗ, йулташсем, социализм ҫӗнтернӗ ҫӗршывра ҫеҫ, „пурне те тивӗҫ суйлав правине нимӗн чухлӗ те пӳлсе хумасӑр“ (Ленин) чӑннипех ӗҫе кӗртнӗ.

Пирӗн суйлав саккунӗн пройекчӗ пурне те пӗртан суйлав прави парать.

Положени пройекчӗн 3-мӗш статйинче ҫапла каланӑ: „РСФСР Конституцин 140 статйи тӑрӑх, депутатсен суйлавӗ пӗртан: кашни граждӑнинӑн пӗр сасӑ пур; суйлавсенче пур граждӑнсем те пӗртан тивӗҫпе пулаҫҫӗ“.

Конституци тӑрӑх, РСФСР Аслӑ Советне граждӑнсем суйлав округӗсем тӑрӑх суйлаҫҫӗ.

Пур суйлав округӗсене те пӗр принцип тӑрӑх тӑваҫҫӗ.

Кашни суйлав округӗ пӗр депутат йарать.

Суйлав округӗсене халӑхӑн шутне пӗр пек хисеп илсе тунӑ принцип суйлаври пӗртанлӑха кӑтартса парать.

Пур суйлав округӗсем те пирӗн пӗр пек виҫелӗ; пур сасӑсем те—пӗр хаклӑ.

Пирӗн суйлав саккунӗн пройекчӗ суйлавҫӑна пӗр суйлаврах темиҫе хут суйлама ирӗк памасть. Пирӗн саккун суйлавҫӑна пӗр суйлав спискине кӗртнисӗр пуҫне урӑх спискӑна кӗртме ҫирӗппӗнех чарать (11-мӗш статйа).

Ҫав вӑхӑтрах, хӑшпӗр капиталисла ҫӗршывсенче, сӑмахран Англире, „нумай сасӑлӑ“ суйлавҫӑсем пур. Вӗсем—предпринимательсем, фабрик-завод хуҫисем, вӗсем саккун тӑрӑх хӑйсем пурӑнакан ҫӗрте те, тата хӑйсен предприйатийӗсем, хӑйсен пурлӑхӗ пур вырӑнта та сасӑлама пултараҫҫӗ.

Положенин пройекчӗ Конституцире кӑтартнӑ пек тӳрех суйламали суйлав системи тӑвать. РСФСР Аслӑ Совечӗн депутатне суйлав округӗсем тӑрӑх вырӑнсенче тӳрех суйлаҫҫӗ.

Йулташсем! Тӳрех суйласси мӗнле вырӑн йышӑнса тӑни халӗ ӗнтӗ пире кашнине паллӑ. Паллах, тӳрех суйлани Совет влаҫ оргӑнӗсен авторитетне ҫӳлерех ҫӗклерӗ, ҫӗклет те, Совет влаҫӗпе ӗҫҫынӗсен йышлӑ масси хушшинчи ҫыхӑнӑва тата та ытларах ҫирӗплетрӗ, ҫирӗплетет те.

Тӳрех суйлани депутатсене хӑйсен суйлавҫисемпе тачӑрах ҫыхӑнса тӑрас тӗлӗшпе усаллӑрах пулса тӑнине ССР Сойузӗн Аслӑ Советне суйлани аван кӑтартса пачӗ.

Йулашкинчен, Конституци кӑтартса панӑ тӑрӑх Положенин пройекчӗ вӑрттӑн сасӑлассине пурнӑҫа кӗртет.

Положенин 1-мӗш статйи РСФСР Аслӑ Советне вӑрттӑн сасӑласа суйлаҫҫӗ, тет, Положенин 67 тата 68-мӗш статйисем вӑрттӑн сасӑлассине саккунлӑ йӗркепе пурнӑҫа кӗртме май параҫҫӗ.

Ҫапла вара, суйлав саккунӗ социалисӑмлӑ суйлав системин тӗп йӗркине—пурне те тивӗҫ, пӗртан тата вӑрттӑн сасӑласа суйлассине пурнӑҫа кӗртме май парать.

Пурне те тивӗҫ суйлавсем тата вӑрттӑн сасӑласси те, епӗ ун ҫинчен малтанах каларӑм, хӑшпӗр капиталисла ҫӗршывсенче те пур. Анчах капиталисла ҫӗршывсенчи суйлав саккунӗсем пурнӑҫа кӗртмеле маррине, суйа иккенне ҫак демократилӗ тейекен ҫӗршывсен парламенчӗсенче камсем ларнине пӑхса тухнипех пӗлме пулать.

Акӑ тӗслӗхрен, Англири 1935 ҫулта нойабӗр уйӑхӗнче суйласа хӑварнӑ общинӑсен палатин составне илер: капиталиссемпе рантйе, урӑхла каласан—ӗҫлемесӗр пулакан тупӑшпа пурӑнакансем 306 ҫын, помещиксем—27, адвокатсем, чиновниксем тата ирӗклӗ профессилӗ ҫынсем—74, рабочисемпе алӑстаҫсем—5 ҫын.

Францири 1936 ҫулта суйласа хӑварнӑ депутатсен палатин составӗ ҫакӑн пек курӑнса тӑрать: фабрик хуҫисем, пӑрахутсен хуҫисем тата помещиксем—139 ҫын, адвокатсем—119 ҫын, ирӗклӗ професҫилӗ ҫынсем—201, рабочисемпе служащисем—63 ҫын.

Патша саманинчи Российӑн Государствӑн III мӗш Думин составӗ ҫине пӑхсассӑн епӗр ҫакна куратпӑр: унта помещиксем-ҫӗрулпучӗсем — 167, ҫӗрхуҫи—хресченсем, урӑхла каласан кулаксем—67, тӗн ҫыннисем—47, сутӑҫсемпе промышленниксем—32, адвокатсем, чиновниксем, врачсем, профессорсем, литераторсем т. ыт. те—113, рабочисемпе алӑстаҫсем—11 ҫын. Ҫавӑн пекех пулнӑ Государствӑн IV-мӗш Думин составӗ те.

Ҫавӑн пек Хӗвеланӑҫ Йевропӑри демократилӗ тейекен ҫӗршывсенчи парлӑментсен тата ҫавӑн пекех патша Российӗ Думин составӗ, парламент вырӑнне хума йурать пулсассӑн.

Пирӗн социалисӑмла парламентӑн—Советлӑ Социалисӑмлӑ Республикӑсен Сойузӗн Аслӑ Совет составӗ пур буржуалӑ парламентсенчен те йалтах уйрӑм.

ССР Сойузӗн Аслӑ Совечӗн пӗрремӗш Ҫессинче Сойуз Совечӗн Мандат Комиҫҫийӗ официаллӑ пӗлтернӗ тӑрӑх, Сойуз Совечӗн 546 депутачӗ хушшинче: рабочисем—247 ҫын, хресченсем—130 ҫын, служащисенчен тата совет интеллигенцинчен—169 ҫын шутланать. Совет интеллигенцийӗ хушшинче академиксем, профессорсем, наукӑ работникӗсем, писательсем, артиссем 9 ҫын.

Вӗсем хушшинче пирӗн ҫӗршыв ҫеҫ мар, тата ытти ҫӗршывсем те пӗлсе тӑракан ҫынсем пуррийе куратпӑр епӗр: вӗсем—Комаров, Бах академиксем, Бурденко профессор, Шолоховпа Алексей Толстой писательсем, Москвин тата Корчагина—Александровскайа артиссем т. ыт. те.

Производствӑра ӗҫлекен Сойуз Совечӗн депутачӗсем пурте стахановцӑсем пулса тӑраҫҫӗ. Йалхуҫалӑхӗнче ӗҫлекен хресчен-колхозниксем—Сойуз Совечӗн депутачӗсем пурте социалисӑмла уйхирсен стахановцӑсемпе хисеплӗ ҫынӗсем пулса тӑраҫҫӗ.

Хресченсенчен Сойуз Совечӗн депутачӗсенчен 25 ҫын колхоз председателӗсем.

Сойуз Совечӗн депутачӗсем хушшинче—242 депутат орденоносецсем. 18 депутат—Совет Сойузӗн Геройӗсем.

Ҫапла вара, ССР Сойузӗн Аслӑ Совет составне чи малта пыракансем, ӗҫҫыннисен активлӑ представителӗсем, пирӗн ҫӗршывӑн чи лайӑх ҫынӗсем кӗнӗ.

ССР Сойузӗн Аслӑ Совечӗн Национальнӑҫсен Советӗнче вырӑссем, украинцӑсем, белоруссем, азербайджанцӑсем, грузинсем, армянсем, туркменсем, узбексем, татжиксем, казахсем, киргизсем, тутарсем т. ыт. те пур.

ССР Сойуз Аслӑ Совечӗн Национальнӑҫсен Советне пурӗ 54 тӗрлӗрен халӑхсем кӗреҫҫӗ.

Сталин йулташ Мускав хулинчи Сталинский округри суйлавҫӑсен суйлав умӗнхи пухӑвӗнче тухса каласа, пирӗн суйлавсемпе Хӗвеланӑҫри демократилӗ тейекен ҫӗршывсенчи суйлавсен хушшинчи тӑрӑн уйрӑмлӑхсем ҫинчен питӗ аван, йаланхи пекех пит те уҫҫӑн ӑнлантарса пачӗ:

„Пурне те тивӗҫ суйлавсем—тет Сталин йулташ—хӑшпӗр капиталисӑмла демократилӗ текен ҫӗршывсенче те пулса иртеҫҫӗ, унта та пулаҫҫӗ. Анчах унта суйлавсем мӗнле лару-тӑрура иртеҫҫӗ-ха? Суйлавсем унта класлӑ ҫапӑҫусен лару-тӑрувӗнче, класлӑ хирӗҫӳсен лару-тӑрувӗнче, капиталиссем, помещиксем, банкирсем капиталисӑман ытти акулисем суйлавҫӑсене хӗснӗ лару-тӑрусенче пулса иртеҫҫӗ. Ҫавӑн пек суйлавсене, вӗсем пурне те тивӗҫ, пӗртан, вӑрттӑн, тӳрремӗн пулин те, пӗтӗмпех ирӗклӗ, пӗтӗмпех демократилӗ суйлавсем теме ҫук.

Пирӗн патӑрта, пирӗн ҫӗршывра, йалтах урӑхла, суйлавсем пачах урӑх лару-тӑрура иртеҫҫӗ. Пирӗн патӑрта капиталиссем ҫук, помещиксем ҫук, ҫапла ӗнтӗ, пурлӑхлӑ классем пурлӑхсӑррисене хӗсни ҫук. Пирӗн патӑрта суйлавсем рабочисем, хресченсем, интеллигенци пӗр пулса ӗҫленӗ лару-тӑрура, вӗсем пӗр пӗрне шанса тӑнӑ лару-тӑрура, епӗ калӑттӑм пӗр-пӗринпе туслӑ пурӑнакан лару-тӑрура, пулса иртеҫҫӗ, мӗншӗн тесен пирӗн патӑрта капиталиссем ҫук, помещиксем ҫук, експлоатаци ҫук, халӑх ирӗкне пӑсас тесе хӗсме, паллах никам та ҫук.

Акӑ ӗнтӗ мӗншӗн пирӗн суйлавсем пӗтӗм тӗнчере пӗртен пӗр чӑннипех ирӗклӗх, чӑннипех демократилӗ суйлавсем пулса тӑраҫҫӗ“.

ССР Сойузӗн Аслӑ Советне суйланӑ результатсем ҫакна кӑтартаҫҫӗ: рабочисемпе хресченсем тата интеллигенци Сталин каланӑ пек пӗр-пӗрне шанса тӑнӑ лару-тӑрура халӑх чӑнахах та хӑйӗнчи лайӑх представителӗсене, пур ӗҫҫыннисен тата пур национальнӑҫсен интересӗсене сыхлама пултаракансене, суйларӗ.

Ҫакӑнта ӗнтӗ пирӗн социалисӑмлӑ суйлав системин аслӑ вӑйӗ.

РСФСР Аслӑ Советне суйламали суйлав кампанине большевикла иртермеле

Суйлав саккунӗн пройекчӗн тӗп задачи—граждӑнсене Сойузӑн Сталинла Конституцийӗ тата пирӗн республикӑн Конституцийӗ паракан хӑйсен суйлав прависене пӗтӗмӗшпех пурнӑҫламали майсем туса парасси.

Сӳтсе йавма тӑратнӑ суйлав саккунӗн пройектне пӗтӗмӗшпех ССР Сойузӗн Сталинла Конституцийӗпе тата РСФСР Конституцийӗпе килӗштерсе тунӑ.

Ҫак саккун граждӑнсен Аслӑ Совета суйлама та тата суйланма та пултаракан прависене ӗҫре пурнӑҫлама пӗтӗмӗшпех май парать тата ӑна никам тӗкӗнеймен тӑвать.

Саккун халӑха хӑйӗн ирӗкне кӑтартма май парать.

Вӑл суйлавҫӑсене сасӑланин итогӗсене пӑсма хӑтланнинчен хӳтӗлет.

Саккунӑн йатарласа тунӑ сыпӑкӗсенче чылай паха организацилӗ ӗҫсене палӑртса хӑварнӑ.

Пӗрремӗшӗнчен, вӑл—суйлавҫӑсен спискин ыйтӑвӗ.

Суйлавҫӑсен хӑйсен прависене пурнӑҫласси, пуриинчен малтан, суйлавҫӑсен спискисене тӗрӗс тунинчен килнине епӗр практикӑра куртӑмӑр ӗнтӗ. Суйлавҫӑсен спискине кӗртнӗ йе „сасӑлама права паракан удостоверени“ пур граждӑнин ҫеҫ сасӑлама пултарнине, епӗр пӗлетпӗр. Ҫавӑнпа та суйлавҫӑсен списки питӗ паха документ пулса тӑрать.

Тата акӑ Положени пройекчӗн 7 статйи суйлав спискисене тӑвас йӗркене кӑтартса парать.

Положени пройекчӗ ҫак ответлӑ задача тӑвассине советсем ҫине хурать: хуласенче—хула совечӗсем ҫине; районсене пайланнӑ хуласенче—район совечӗсем ҫине тата йалсенче—йалсовечӗсем ҫине.

Советсем суйлавҫӑсен спискисене пур граждӑнсене те суйлав прави пуррисене, ҫав совет территорийӗнче (йалан йе вӑхӑтлӑха) пурӑнаканнисене тата суйлав кунӗ тӗлне 18 ҫула ҫитнисене кӗртме тивӗҫлӗ (8 ст.).

РСФСР Конституцийӗ тӑрӑх суйлавҫӑсен спискисене суд приговорӗсем тӑрӑх суйлав прависӗр хӑварнӑ ҫынсене, ҫавӑн пекех саккун кӑтартнӑ йӗрке тӑрӑх ӑсран тухнӑ тесе шутланӑ ҫынсене ҫеҫ кӗртмеле мар (9 ст.).

Суйлавҫӑсене нихӑшне те пӗр суйлав спискине картнинчен пуҫне урӑх спискӑна кӗртме йурамасть.

Суйлав умӗн 30 кун малтан ӗҫҫынни депутачӗсен совечӗ суйлавҫӑсен спискисене пурте пӑхса тухма кӑларса ҫакмала йе ҫав спискӑсемпе паллашма ӗҫҫыннисене май туса памала (14 ст.).

Ӗҫҫынни депутачӗсен совечӗн Ӗҫтӑвакан Комитечӗ суйлавҫӑсен спискисенчи тӗрӗсмарлӑхсем ҫинчен панӑ кашни зайавленийе виҫӗ кун хушшинче пӑхса тухма тивӗҫ (18 ст).

Совет решенийӗпе килӗшмесен, зайавлени паракан суйлавҫӑ халӑх судне жалӑба пама пултарать (19 ст.), халӑх сучӗ ӑна 3 кун хушшинче пӑхса тухса, хӑйӗн решенийӗ ҫинчен зайавлени паракана та, ҫаплах тата совета та пӗлтерме тивӗҫ (20 ст.).

Суйлавҫӑсен спискисене тӑвас тӗлӗшпе ӗҫ ҫапла тӑрать ӗнтӗ.

Тепӗр ыйту суйлав участкисем ҫинчен.

25,26,28 статйасем суйлав участкисене мӗнле тумалине тӗплӗн кӑтартса параҫҫӗ.

Суйлав бюллетенӗсене йышӑнма тата граждӑнсене хӑйсен суйлав прависене пурнӑҫлассине ҫӑмӑллатма 2000 ҫын ытла шутланакан рабочи поҫолкӑсене, йалсене тата хуласене суйлав участкисене пайлаҫҫӗ—1500—2500 ҫын пуҫне пӗр участкӑ.

Йалсенче, кашни йалсовечӗ, станицӑ, йал, аул, унта пурӑнакансем 500 ҫынран пуҫласа 2000 ҫынран ытла мар пулсан—уйрӑм суйлав участки тӑваҫҫӗ.

Халӑх хисепӗ 500 ҫынран сахалрах, анчах 300 ҫынран кайа мар йалсенче йе йалсен ушкӑнӗнче, ҫавӑн пек йалсем суйлав участки центрӗнчен 10 километр ытла инҫетре пулсан, уйрӑм суйлав участкисем тума йурать.

29 статйа суйлавҫӑсемшӗн уйрӑмӑн тӑрӑшнин примерӗ пулса тӑрать, вӑл статйа тӑрӑх Ҫурҫӗрпе хӗвелтухӑҫри инҫетри районсенче, вак йалсем ытларах ҫӗрте, суйлав участкисене 100 ҫынран сахал мар халӑх хисепӗпе те организацилеме йурать.

Ҫурҫӗрти нацилӗ районсенче, ҫавӑн пекех тата сӑрт-тулӑ тата халӑх куҫса ҫӳрекен районсенче, РСФСР Аслӑ Совечӗн Президиумӗ ирӗк панӑ тӑрӑх, 100 ҫынран сахалрах, анчах 50 ҫынран сахал мар халӑх хисепӗпе те суйлав участкисем тума йурать.

100 ҫынран йе тата 50 ҫынран пӗчӗк суйлав участкисем организацилени, хӑйне хӑйех паллӑ ҫурҫӗрти тата айакра пурӑнакан ытти районсенчи халӑхсене суйлава хутшӑнма чӑн-чӑн май туса парать.

Ҫар службинчи ҫынсене суйлавран пӑрса хӑваракан буржуалӑ конституцисене хирӗҫле пулса, пирӗн Положени Рабочисемпе Хресченсен Хӗрлӗ Ҫарӗн командирӗсене, комиссарӗсене тата бойецсене суйлава хутшӑнма май парать.

Суйлав Положенин 31 статйи тӑрӑх, ҫар чаҫӗсем тата ҫар перлешӳвӗсем уйрӑм суйлав участкисем пулса тӑраҫҫӗ, вӗсенче суйлавҫӑсен хисепӗ 50-ран сахал мар тата 1.500 суйлавҫӑран ытла мар пулмала, вӗсем чаҫсем йе ҫар перлешӳвӗсем тӑракан вырӑнсенчи суйлав округне кӗреҫҫӗ.

Суйлав вӑхӑтӗнче хӑйсен ӗҫӗсене чарса лартма пултарман учрежденисем те пур. Чирлӗ ҫынсене, дежурствӑри медицинӑ работникӗсене тата чирлисене пӑхса тӑракан ҫынсене Аслӑ Совет суйлавне хутшӑнма май парас тӗлӗшпе, пройект больницӑсенче, ача ҫуратмали ҫуртсенче, санаторисенче, инвалидсен ҫурчӗсенче суйлавҫӑсен хисепӗ 50-ран кайа мар пулсан уйрӑм суйлав участкисем тума кӑтартса хӑварать (32 ст.).

Уйрӑм суйлав участкисем тума май ҫук пулсан, саккун пройекчӗ сывалмали учрежденисенче, суйлав комиҫҫисен йатарласа уйӑрнӑ членӗсене сывалмали ҫуртсенчи суйлавҫӑсенчен суйлав бюллетенӗсене йышӑнма ирӗк парать. Кун пек чух больницӑсене уйрӑм суйлав йешчӗкӗ параҫҫӗ.

Ҫул ҫинчи (суднӑсем, пассажирлӑ пойӑсӗсем ҫинчи) суйлавҫӑсене хӑйсен правине пурнӑҫлама май парас тӗлӗшпе, пройект (33 ст.) суйлав кунӗнче ишсе ҫӳрекен кимӗсем ҫинче, суйлавҫӑсен хисепӗ 25-рен кайа мар пулсан, тата инҫе ҫӳрекен пассажир пойӑсӗсем ҫинче уйрӑм участкӑсем тумалине палӑртса хӑварать. Пирӗн ҫӗршывӑн шыв ҫулӗсем, ҫаплах тата чукунҫулсем те вӑйлӑ ҫӗршывра, саккунӑн ҫак статйи уйрӑм вырӑн йышӑнса тӑрать.

Суйлав округӗсене ҫапла принципа тӑваҫҫӗ: округ пуҫне 150 000 халӑх. Суйлавсене иртерес ӗҫре чӑн-чӑн халӑх контроле тӑвас тӗлӗшпе, Суйлав Комиҫҫийӗсем тӑваҫҫӗ—Тӗп Суйлав Комиҫҫийӗ, округра Округ Суйлав Комиҫҫийӗ тата участкӑра Участкӑри Суйлав Комиҫҫийӗ.

Суйлав Комиҫҫийӗсене обществӑлӑ организацисен тата ӗҫҫынни обществисен представителӗсенчен тӑваҫҫӗ.

Суйлав Комиҫҫийӗсем ҫине саккун тӑрӑх суйлаври чи ответлӑ положенисене пурнӑҫлассине хураҫҫӗ—кандидатсене регистрацилесси, суйлав бюллетенӗсем парасси тата сасӑсене шутласси.

Суйлав Комиҫҫийӗсем Ленин—Сталин партин ӗҫӗшӗн паранна ҫынсенчен, ҫирӗп ҫынсенчен, совет халӑхӗн чи лайӑх ҫыннисенчен тӑни пире Сойуз Аслӑ Совет суйлавӗсен опытӗнчен паллӑ.

Пирӗн республикӑн Аслӑ Советне суйлана чух та Суйлав Комиҫҫийӗсем ҫакнашкал пулмала.

Малала. Положени пройектӗнче кандидатсем тӑратас йӗрке ҫинчен калакан сыпӑк пур. Ҫав сыпӑкри 48-мӗш статйара ҫапла калана:

„РСФСР Аслӑ Советне кандидатсем тӑратас права — РСФСР Конституцин 146 статйи тӑрӑх—обществӑлӑ организацисемпе ӗҫҫыннисен обществисене: коммунисла партилӗ организацисене, професҫилӗ союзсене, кооперативлӑ организацисене, ҫамраксен организацийӗсене, культурӑлӑ обществӑсене тата саккун йӗркипе регистрацилене ытти организацисене тивӗҫлӗ“.

(Малали пулать).

Григорий Константинович ОРДЖОНИКИДЗЕ

Вилĕренпе пĕр çулталăк тулнă тĕле



Пĕр çулталăк каярах — 1937 çулти февралĕн 18-мĕшĕнче — пирĕн партипе çĕршывăн йывăр çухату пулса тăчĕ: кĕтмен çĕртен хăварт вилсе кайрĕ паллă та пысăк руководител, Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн ывăнма пĕлмесĕр кĕрешекен паттăр, социалисăмлă индустри йалтăраса тăракан чаплă çĕнтерӳвĕсен хастарлă организаторĕ, ПСК(б)П Тĕпкомĕн Политбӳро членĕ, Йывăр промышленнăç халăх Комиссарĕ—Григорий Константинович Орджоникидзе.

Г. К. Орджоникидзе йулташăн, хăйĕн пĕтĕм пурнăçне Ленин — Сталин ĕçĕсен çĕнтерӳвĕшĕн кĕрешес ĕçе панăскерĕн, биографийĕ болъшевикла парти историн çутă страницисене аса илтерет.

Григорий Константинович Орджоникидзе (партири йачĕ Серго) 1886 çулхи октаберĕн 28-мĕшĕнче, Хĕвеланăç Грузири Гореша йалĕнче, чухăн хресчен семйинче çуралнă.

Г. К. Орджоникидзе 17 çулта чухнех, 1903 çулта, Российари Социал-Демократла Рабочи Партине кĕрет. 1905 çулта Кавказлешийĕн ĕççынисем патша влаçне хирĕç пыракан револъуцилĕ кĕрешӳне Сталин йулташ — Кавказлешийĕн болъшевикла организацийĕ, тăваканĕ, ушăн руководителĕ йертсе пынă. Йашă чухнехи çулсенчен тытăнса çамрăк Серго болъшевикла ĕçĕн Сталинла шкулĕ витĕр тухаť.

19 çулхи çамрăк, вăл—Сухум округĕнчи парти комитечĕн членĕ. 1906 çулхи йанвар уйăхĕнче Гудаути çывăхĕнчи Бомбары йалĕнче Сергона пирвайхи хут арĕслеççĕ. Çамрăк револъуционер патша тĕрминче çур çул ларса ирттерет. Тĕрмерен кăларнă хыççăн вăл Тифлиса тухса кайаť. Серго унта болъшевиксен „Дро" („Вăхăт") йатлă хаçачĕн редакцинче пирвайхи хут Сталин йулташпа тĕл пулнă. Сталин йулташ унчухне çав хаçатăн редакторĕ пулнă.

1906 çулхи март уйăхĕнче Серго Бакура, Кавказлешийĕн ĕççынисем чи йышлăн пурăнакан хулара. Вăл—болъшевиксен Бакури комитечĕн членĕ. Вăл комитета Сталин йулташ йертсе пынă.

Абхазире револъуцилĕ ĕçсем тунăшăн крепăçре пĕр çулталăк ларса тухсан, 1909 çулхи çуркунне, Сергона Çĕпĕре, Йенисей кĕпĕрнинчи Пичунг вулăсĕнчи Натаскуй йалне ссылка йараççĕ. Икĕ уйăх ирттерсессĕн Серго ссылкăран тараť. Вăл Баку хулине таврăнаť те каллех револъуцилĕ ĕçе тытăнаť.

1910 çулхи нойабĕр уйăхĕнче Серго Парижа, Ленин патне кайаť. 1911 çулта Лонжӳмора (Париж çывăхĕнче) Ленин рабочи парти шкулĕ организацилене пулнă. Çав шкулта Серго Орджоникидзе те вĕренет. Серго часах Российăна килет. Ленин ăна партин Пĕтĕм Российă конференцине пухма хатĕрленес тĕлĕшпе ĕçлеме йараť.

Ĕçлемешкĕн условисем калама çук йывăр пулнă пулсан та, Ленин парса йанă заданийе Серго пит те чаплăн пурнăçлаť. Сталин йертсе пынипе ĕçлесе, 1911 çулхи кĕркунне пусламĕшĕнче Орджоникидзе партин Пĕтĕм Российари конференцине (Прагăра пулнă конференци) хатĕрленес тĕлĕшпе ĕçлекен организацилĕ комиççи туса хураť. Прагăри конференцире çирĕмрен те ытларах организацисен представителĕсем пулнă. Вăл конференци 1912 çулхи йанвар уйăхĕнче пулса иртнĕ, вăл болъшевикла парти сйесĕ пекех пулнă.

Прагăри конференцире меншевиксене-ликвидаторсене партирен татăкланах хăваласа кăларнă. Меншевиксемпе формалъна пĕрлешес тенин йулашкисене болъшевиксем пĕтĕмпех, ĕмĕрлĕхех пĕтерсе хунă. Прагăри конференци болъшевикла парти хăйне уйрăмăн ĕçлесе пурăнассин пусламĕшне тунă, вăл болъшевисăм историнчи улшăну пункчĕ пулса тăнă.

Орджоникидзе йулташ Прагăри конференцийе Тифлисри болъшевикла организацирен делегат пулса пынă. Конференцире Григорий Константинович Прагăри конференцийе пухас тĕлĕшпе ĕçленĕ Российари организацилĕ комиççин отчотне туса параť. Çавăнтах ăна Российари Социал-Демократла (болъшевиксен) Рабочи Парти Тĕпкомĕн составне суйласа хураççĕ.

Ленин панă сĕнӳ тăрăх Тĕпком членĕсенчен нумайĕшĕсем (виççĕрен пиллĕкĕш) Российăра ĕçлемеле пулнă. Российари ĕçсене йертсе пымашкăн Тĕпком бӳровĕ туса хураççĕ. Вăл бӳрона Сталин, Орджоникидзе тата Спандарйан йулташсем кĕреççĕ.

1912 çулхи февралъ уйăхĕнче Серго Петербурга килет, унтан вара Вологдă кĕпернине, Сталин йулташ патне тухса кайаť. Ун чухне Сталин йулташ унта ссылкăра пулнă. Ссылкăран тухса тарнă Сталин йулташпа пĕрле Серго Бакуна унтан Тифлиса кайаť.

1912 çулта çуркунне Серго каллех Петербурга таврăнаť, унта ăна арĕслеççĕ. Шлиссельбург крепĕçĕнче виçĕ çул хупса усранă хыççăн, 1915 çулта кĕркунне Сергона Йакутине ссылка йараççĕ.

Револъуцилĕ ĕçре 15 çул (1917 çулчченхи тапхăр) пулса, Г. К. Орджоникидзе 8 çул хушши патша тĕрмисенче, Шлиссельбург крепĕçĕнче, ссылкăра ирттернĕ.

Февралъ револъуцийĕ пулнă вăхăтра Серго Йакути ссылкинче пулнă.

1917 çулхи май уйăхĕнче Серго Иркутска тухса кайаť, унтан вара—Петрограда.

Болъшевикла партин историлĕ 6-мĕш сйесĕ—партине хĕçпăшаллă переворот тăвас çул çине тăратнă сйес пухăнаť. Контрреволъуцилĕ Вăхăтлăх правителства хĕсĕрленĕ-йĕрленĕ пирки, Ленин вăрттăн ĕçлесе пурăнма тытăнаť. Сйес пухас ĕçе Сталин йулташ хатĕрленĕ, Сталин йулташах сйеса та йертсе пынă.

Серго Сталин хушнипе директивăсем илмешкĕн икĕ хутчен Ленин патне, пурăннăшĕн те паллă Сестрорецкри шалаша, кайса килнĕ. Контрреволъуцилĕ буржуази тата вĕсен тарçисем — меншевиксем, эс-ерсем Ленина суд тума ыйтнă. Тăван çĕршыва сутакансем—Троцкий, Каменев, Рыков: Ленинăн тискеркайăкланса кайнă контрреволъуци сучĕ умне тăмала, тесе çине тăнă. Сйесра Орджоникидзе йулташ, Сталин йулташ хыççăн, Ленин буржуалă суда пымала тенине хирĕç чи çивĕччĕн тухса калаçаť.

Сйес Сталинпа Орджоникидзе хыççăн кайаť: Ленин пурнăçĕ хăтăлаť.

Серго Петроградра Октаберти социалисăмлă переворота активлăн хутшăннă. Петроград комитечĕн çапăçулă заданине пурнăçа кĕртсе, Серго Пулково (Петроградран инçе мар) патĕнчи фронта кайаť. Пулково патĕнчен Керенский Краснов генералпа тата Войтинский меншевикпа пĕрле, казаксен корпусĕн пуçне тăрса, револъуцилĕ Петроград çине наступлени туса пыма пикеннĕ пулнă. Хăйне парти панă заданине Серго ăнăçлăн пурнăçлаť: казаксен чăсĕсене хĕçпăшалсăрлантараççĕ.

1918 çулта çуркунне Серго Орджоникидзе Дон-çи Ростовра. Гĕрмани çарĕсемпе гайдамаксем Донпа Кубанъ çинеле куçса пынă. Серго интервентсене хирĕç тăрас ĕçе организацилет. Май уйăхĕнче нимĕç-гайдамак çарĕсем тата шурă казаксем Ростова йышăнаççĕ. Серго хăйĕн чăсĕсемпе пĕрле Батайск патнеле, унтан Тихорецкайа патнеле чакаť, çавăнтан вара çапăса-çапăса Царицын патнеле куçса пыраť. Вăл Царицынăн легендарлă оборонине организациленĕ Сталин йулташăн шанчăклă пулăшаканĕ пулнă.

Кубанъ çинеле нимĕç çарĕсем куçса пынă. Орджоникидзе Кубанъ çинеле васкаť. 1918 çул вĕçĕнче Деникин кĕтĕвĕсем Терск облаçĕн чиккисем патнеле çывхарса пынă. Вĕсем, интервентсем пулăшнипе, вунпĕрĕмĕш Хĕрлĕ Çар çине тапăнаççĕ. Вăл çар Совет Российĕпе çыхăнусăр тăрса йулнă пулнă, снарйадсемпе патрунсемсĕр тăрса йулнă, çынсем тиф чирĕпе аптăранă пулнă. Çак йывăртан та йывăр условисенче паттăр та çирĕп Серго деникинçăсене хирĕç пыракан çапăçу пуçне тăраť.

Йанвар уйăхĕн вĕçĕнче Деникин çарĕсем Владикавказ патне çывхараççĕ. Çичĕ кун хушши паттăрăн çапăçнă хыççăн хуларан тухса кайма тивет. Коммунисссем Серго йертсе пынипе тусем çине шалала кĕрсе кайаççĕ. Тифлисра, унтан Бакура темиçе уйăх хушши вăрттăн ĕçленĕ хыççăн, Серго пулă тытмалли парусла кимĕ çине ларса Каспий тинĕсĕ урлă Астрахане çитет, унтан Мускава кайаť. Астраханъре Орджоникидзе пирвайхи хут С. М. Кировпа тĕл пулаť. Кайран вăл С. М. Кировпа ĕмĕрлĕхех пит те таччăн туслă пулса пурăнаť.

1919 çулхи ийулъ уйăхĕнче Орджоникидзе йулташа парти хĕвеланăç фронтне Сталин йулташ патне йанă, вунултăмĕш çарăн Револъуцилĕ Çар Совечĕн членĕ туса хунă.

1919 çулхи кĕркунне Серго Кăнтăр фронтĕнче. Вăл Деникина хирĕç çапăçакан вунтăваттăмĕш çарти Револъуцилĕ Çар Совечĕн членĕ. Октаберĕн 20-мĕшĕнче, Сталин заданийĕ тăрăх ĕçлесе, Серго латышсен дивизин пуçне тăрса çапăçса Орйол хулине кĕрет.

1920 çулхи февралъ уйăхĕнче Тĕпком решенийĕ тăрăх Çурçĕр Кавказра çĕнĕрен совет влаçĕ туса хурас тĕлĕшпе ĕçлеме парти бӳровĕ туса хураççĕ. Бӳро председателĕ туса Серго Орджоникидзене йараççĕ, унăн заместителне—С. М. Кирова тăваççĕ.

* * *

Орджоникидзе револъуци умĕнче тунă чаплă ĕçсене парти пит те çӳле хурса хакларĕ. Серго Грузире контрреволъуцин йулашкисене пĕтерсе пынă кунсенче, партин вуннăмĕш сйесĕ ăна хăйсĕрех Тĕп Комитетăн членне суйланă.

1921 çулхи майăн 19-мĕшĕнче Пĕтĕм Российă Ĕçтăвакан Тĕп Комитет Президиумĕ Сергона Хĕрлĕ йалав орденĕпе наградăланă.

Серго нумай нацилĕ Кавказлешийĕн халăхсен тăванлă союзне ывăнма пĕлмесĕр çирĕплетсе пынă.

Орджоникидзе йулташ—Советлă Республикăсен Кавказлешийĕн Федерацине тăвакан. Вăл Федерацилĕ Советлă Кавказлешийĕн халăхĕсен политикăлă, хуçалăхлă тата културăлă çĕкленӳвĕнче калама çук пысăк вырăн йышăнса тăчĕ.

Партин XI, XII, XIII, XIV-мĕш сйесĕсенче Серго вĕçĕмренех парти Тĕп Комитечĕн составне суйланса пынă.

XIV-мĕш сйесра Орджоникидзе йулташ тăван çĕршыва сутакан Зиновйевпа Каменева болъшевика тивĕçлĕ мĕн пур хĕрӳлĕхпе çунтараť. Серго хăйĕн сйесра каланă сăмахĕнче ирсĕр сутăнчăксене, пур тĕрлĕ мелсемпе те усă курса социалисăм тăвас ĕçе чарса лартма тăрăшакансkерсене, пĕр шеллемесĕр тăрă шыв çине кăлараť.

Тăшманпа нихăçан килĕшсе тăман болъшевик, Ленин—Сталин партине вĕçĕ-хĕррисĕр йуратакан Серго Орджоникидзе партири пĕрлĕхшĕн, парти речĕсем çирĕп пĕтĕçсе чăмăртанса тăрассишĕн ывăнма пĕлмесĕр кĕрешнĕ.

1926 çулхи нойабĕр уйăхĕнче Тĕп Комитетăн тата Тĕп Контролъ Комиççин пĕрлешӳлĕ Пленумĕ Орджоникидзе йулташа Тĕп Контролъ Комиççи председателне суйлаť. Çавăнпа пĕрлех, Тĕпĕçтăвком Президиумĕ йышăннă постановлени тăрăх, Рабочисемпе Хресченсен Инспекцин Халăх Комиссарĕ тата ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕн заместителĕ тăваççĕ.

Партин XV-мĕш Сйесĕнче Серго, Тĕп Контролъ Комиççи—Рабочисемпе Хресченсен Инспекци ĕçĕсем çинчен отчотпа тухса каласа, тăван çĕршыва сутас шухăш тытса партийе хĕсĕнсе кĕнĕ троцкисла-зиновйевла ирсĕрсене партирен кăларма ыйтаť.

Сйес Серго панă сĕнӳве йышăннă.

Çĕнĕрен капиталисăмла йĕрке туса хума ĕмĕтленнĕ троцкисла-зиновйевла бандитсен блокне аркатса тăкнă хыççăн, чăсах сылтăмри бандитсем—Бухарин, Томский, Рыков хăйсен пуçĕсене çĕклеççĕ. Орджоникидзе йулташ çав ирсĕр сутăнчăксене пĕр шеллемесĕр çĕмĕрсе пынă.

1930 çулхи йанварĕн 10-мĕшĕнче Сергo Орджоникидзене ССР Сойузĕн Халăх Хуçалăх Аслă Совечĕн председателĕ тăваççĕ, Тĕп Комитетпа Тĕп Контролъ Комиççин Пĕрлешӳлĕ Пленумĕ ăна ПСК(б) Парти Тĕп Комитечĕн Политбӳро составне кĕртет.

Серго йачĕпе социалисăмăн аслăран та аслă çĕнтерӳвĕсем çыхăнса тăраççĕ. ССР Сойузĕ пĕтĕм тĕнче йышăннă индустрилĕ державă пулса тăчĕ—кунта ĕнтĕ сталинла халăх комиссарĕн Серго Орджоникидзен мухтава тивĕçлĕ ĕçĕсем калама çук пысăк. Техникăлă прогресăн аслă йалавне йăтса пыраканĕ, Орджоникидзе йулташ, хăйĕн йаланхи болъшевикла хастарлăхĕпе ĕçлесе, ССР Сойузĕн йывăр промышленнăçне туса хурас тĕлĕшпе пыракан аслă кĕрешӳ пуçне тăчĕ, ăна йертсе пычĕ.

1935 çулхи март уйăхĕнче ССР Сойузĕн Тĕпĕçтăвкомĕ йышăннă постановлени тăрăх „ССР Сойузĕн йывăр промышленнăç Халăх Комиссариачĕ тăрăх 1934 çулхи производствă программине ытлашшипех тултарнăшăн тата производствăна организацилес, техникăпа хĕçпăшалланас ĕçре тунă çитĕнӳсемшĕн" Сергона Ленин орденĕпе наградăланă.

Алексей Стахановăн кăмрăк катмалли мăлатукĕ улăпла хăватлăн çапнинче Орджоникидзе сасартăках цĕтĕм халăхлă хăватлă йухăмăн аслă пусламĕшне курса илнĕ. Вăл стахановецсен çĕнтерӳвĕсене хаваслăн кĕтсе илнĕ, стахановла йухăма чăрмантаракансемпе хайаррăн кĕрешнĕ. Серго рйадовой стахановецсен сассине тимлĕн-туйăмлăн итленĕ, вĕсене бӳрократсемпе консерваторсен сĕмсĕрлĕхĕнчен хӳтлесе тăнă.

1936 çулхи йанвар уйăхĕнче ССР Сойузĕн Тĕпĕçтăвкомĕ „1935 çулхи производствă планне ытлашшипех тултарнăшăн, çĕнĕ техникăна алла илес ĕçре тунă çитĕнӳсемшĕн тата стахановла йухăма сарса йарас ĕçри пуçарулăхшăн" Орджоникидзе йулташа Ĕçлĕх Хĕрлĕ Йалав орденĕпе наградăланă.

Серго Орджоникидзе государствăн пысăк дейателĕ—ленинла сталинла сăнарлă дейател пулнă. Пĕр вырăнта пăнтăхса тăрассине мĕнле те пулин палăртакан çынсемпе нихăçан та килĕшсе тăманскер, Серго социалисăма йуратакан çынсем тĕлĕшпе тĕлĕнмеле пысăк тимлĕхлĕ пулнă.

Çулталăк каярах, 1937 çулхи февралĕн 18-мĕшĕнче, Сергон калама çук чаплă пурнăçĕ татăлчĕ.

Болъшевикла партин чи лайăх ывăлĕн, хăйĕн йулашки сывлăшĕ тухиччен Ленин—Сталин ĕçĕшĕн, социалисăм çĕнтерӳвĕшĕн кĕрешнĕскерĕн сăнарне, Серго Орджоникидзен çутă сăнарне совет халăхĕ ĕмĕр-ĕмĕрех хăйĕн асĕнче усрĕ.

(ТАСС).

Вилнĕ сывлăш вĕçевçисен тăванĕсем—СТАЛИН йулташа

Пирĕн хаклă аттемĕр, тусăмăр тата йуратнă çулпуçăмăр СТАЛИН йулдаш!

Хамăрăн хаклă упăшкасене, тăвансене тата ывăлсене çухатнине пула пирĕн тĕле килсе тухнă хуйхăлă кунсенче, пирĕншĕн, „СССР В-6" екипажĕн вилнĕ членĕсен çемйисемшĕн ăшшăн тăрăшнăшăн, пулăшу панăшăн епĕр Сире пысăккăн тав тăватпăр. Есĕр пирĕншĕн тăрăшни пирĕн хуйхăмăрсене çăмăллатаť. „СССР В-6" екипажĕнче пулнă, инкеклĕн пĕтнĕ пирĕн тăвансем хăйсен тăван çĕршывне хĕрӳлĕн, чĕрĕрен йуратнă. Вĕсен вĕçевĕ хамăр тăван çĕршывăмăра мухтава кăларас хĕрӳлĕ патриотисăмла кăмăлран çуралса тухнă. Вĕсем 4 хăйулă папанинçăсене пăр çинчен илес ĕçе хутшăнас кăмăлпа хĕмленсе çуннă. „СССР В-6" карап вĕççе çĕкленсе кайнă кун епĕр вĕсемпе пĕрле хаваслanса хумханнă, вăл ĕç ăнăçлă пуласса таранăн шанса тăнă. Хамăрăн социалисăмлă тăван çĕршывăмăрăн хаклă та йуратнă, Ленин—Сталин партин ĕçне чунтан йуратса тăвакан çулăмлă патриочĕсене ансăртран килсе тухнă инкек пиртен туртса илчĕ.

Пирĕн хуйхă вĕçĕмсĕр пысăк, анчах пире çак йăпатаť: сывлăшра вĕçес ĕçе — хăйсен çапăçу постĕнче вилнĕ геройсем çав тери хĕрӳлĕн йуратнă ĕçе— сывлăшвĕçевçисен коллективĕ, пĕр çын пек тăрса, тата ытларах çине тăрса малала сарса пырĕ.

Епĕр çакна шанса тăратпăр: кашни вилнĕ паттăр вырăннех сывлăшра вĕçес ĕçри вуншар та çĕршер геройсем тăрĕç, пĕтнĕ карап вырăнне вуншар çĕнĕ, хăватлă карапсем тăвĕç.

Спасибă Сире, тăван Сталин йулташ, спасибă совет правителствине, есĕр пире — вилнĕ дирижаблиссен çемйисене пулăшнăшăн, тимлĕхпе те ăшă кăмăлпа çавăрăнса пăхнăшăн.

Гудованцевсем—амăшĕ, тăванĕсем, йăмăкĕсем.
Черновсем—арăмĕ, хĕрĕ.
Лънгузовсем—арăмĕ, хĕрĕ, амăшĕ, ашшĕ, йăмăкĕсем.
Градус—арăмĕ, хĕрĕ, амăшĕ, ашшĕ, тăванĕсем.
Панъковсем—арăмĕ, хĕрĕ, амăшĕ, ашшĕ, шăлънĕ.
Никитинсем—арăмĕ, амăшĕ.
Ритсланд—амăшĕ, ашшĕ, шăлънĕ, йăмăкĕсем.
Конъашинсем—арăмĕ, хĕрĕсем, шăлънĕ.
Кулагина—амăшĕ.
Шмелъковсем—амăшĕ, ашшĕ, тăванĕсем, йăмăкĕсем.
Мйачковсем—арăмĕ, амăшĕ.
Деминсем—арăмĕ, амăшĕ, тăванĕсем.
Кондрашевсем—арăмĕ, амăшĕ, тăванĕсем, аппăшĕ-йăмăкĕсем.

Черевычнăйпа Власов лъотчиксем Папанин пăрĕ çинче

Февралĕн 15-мĕшĕнче 15 сехетре, лъотчик Черевичный Карабанов пилотпа пĕрле „Ш 2" самолъот çинче, „Мурман" самолъочĕсемшĕн аеродром пулса тăракан пăр çинчен вĕççе тухнă. Вĕсемпе перле вунă талăклăх апат-çимĕç запасĕ тата ăшăтмали лампă пулнă. Йур çунипе начар курăннине пула Черевичный кайала таврăнман. Çакăнпа пĕр вăхăтрах „Таймыр" борчĕ çинчен „У-2" самолъотпа Власов лъотчик вĕççе тухнă. Власов вĕçевре икĕ сехет пулнă, анчах йур çуса тănине пула нимĕн те тупман; кайала таврăннă та „Мурман" çывăхĕнчи пăр çине анса ларнă.

Февралĕн 16мĕшĕнче лъотчик Черевичный „Мурман" борчĕ çине вĕççе таврăннă та каллех „Ш 2" самолъотпа лагер йенеле вĕççе кайнă (17 сехет те 15 минутра). 18 сехет те 35 минутра Черевичный Папанин лагерне анса ларнă. Çав вăхăтрах Власов лъочик та „У-2" самолъотпа вĕççе тухнă. 18 сехет те 55 минутра Власов Папанин лагерĕ çывăхне анса ларнă. 19 сехет те 06 минутра Власов вĕççе çĕкленсе карап йенеле çул тытнă.

Февралĕн 16-мĕшĕнче 09 сехетре, „Таймыр"—Мускав хушшинче радио-телефонлă калаçу вăхăтĕнче, Осталъцев йулташ февралĕн 15-мĕшĕнче 24 сехетре хăй Папанинпа калаçни çинчен пĕлтернĕ Папанин; пăр çинче виçĕ уйăхран кайа мар вăхăт пит те лайăх тытăнса тăма пултаратăп, тесе пĕлтернĕ. Пăран йулашки вăхăтри вырăнĕ—широта 71 градус та 13 минут, долгота 20 градус та 05 минут. Февралĕн 16 мĕшĕнче, Папанин лагерĕ патне Власов вĕççе пынă хыççăн, Осталъцев йулташ Папанинпа—çынсемпе йапаласене пăр çинчен мĕнле йĕркепе илесси пирки калаçнă.

(ТАСС).

ИСПАНИРИ ФРОНТСЕНЧЕ

(Парижран тата Барселонăран пĕлтернĕ тăрăх)

ЦЕНТРТИ ФРОНТ.

Республикă артиллерийĕ Брунете районĕнче тата Харама йуханшыв секторĕнче пăлхавçăсен позицийĕсем çине вăйлăн бомбăсем пăрахнă. Пăлхавçăсем Куеста де ла Рейна секторĕнче республикă позицийĕсем çине атакăлама тăнă, анчах ăна республиканçăсем сирсе пăрахнă.

Еспанъ агентстви пĕлтернĕ тăрăх, республикă çарĕсем Карабанчел Бахора виçĕ минă сиктерсе йарса, çар госпиталĕ патне çитиччен малала кайнă.

ХĔВЕЛТУХАÇРИ (АРАГОНИРИ) ФРОНТ.

Испанин оборонă министерстви пĕлтернĕ тăрăх, февралĕн 15-мĕшĕнче республикă çарĕсем Вилъйануева делъ Реболъйар секторĕнче 4 километр сарлакĕш фронтра наступлени туса, пăлхавçăсен чылай позицийĕсене йышăнса илнĕ. Ку çапăçура 150 пăлхавçăна тыткăна илнĕ, хĕçпăшалсем тата çапăçмалли хатĕрсем туртса илнĕ.

Вивелъ делъ Рио районĕнче (Монталъбанран хĕвеланăçнеле) республикă çарĕсем çавнашкалах тăшманăн мĕн пур контратакисене сирсе пăрахса, пăлхавçăсен чылай позицийĕсене тытса илнĕ.

КĂНТĂРТИ ФРОНТ.

Гренадă секторĕнче республикă çарĕсем 1.086 текен çӳлĕ вырăна йышăнса илнĕ. Ытти фронтсенче улшăнусем çук.

(ТАСС).

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

ЛОНДОН, февралĕн 15-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентствин Бейпинри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Хебей провинцин кăнтăр йенчи пайĕнче Йапони çарĕсем тапăннă май, Китай партизанĕсем питĕ активлăн çапăçма пуçланă.

Бейпин—Ханъкоу чукунçулĕн çурçĕрти участкинче, партизансем станцăсемпе пойассем çине тапăнипе, Йапони пойасĕсем çӳреме чарăннă. Йулашки икĕ кун хушшинче Шицзйачжуаран пĕр пойас та пыман. Бейпинра Баодина каймалли билетсене сутма чарăннă. Баодин çывăхĕнче вăйлă çапăçусем пулса иртеççĕ тесе пĕлтереççĕ. Динчжоу хулине (Баодинран кăнтăртарах) Китай партизанĕсем тытса илнĕ.

Корреспондент малала çапла çыраť: Хананъ провинцин çурçĕр йенчи пайĕнче Йапони çарĕсем халъ те Бейпин-Ханъкоу чукунçулĕ тăрăх кăнтăрала тапăнса пыраççĕ. Халъхи вăхăтра çапăçусем Вейхой хулин районĕнче, Чжандерен кăнтăртарах, пыраççĕ. Хирĕç-хирĕç тытăçса çапăçнисем нумай пулнă, тесе палă тăваççĕ. Китайçăсене хирĕç штыксемпе çапăçмала пуласран шикленсе, йапонçăсем малтан танксем йама пуçланă. Уйрăмăнах хайар çапăçусем Синъçан тата Чанъуанъ хулисен çывăхенче пулса иртнĕ Ку çапăçусенче икĕ йенчен те вилнисем кăна темиçе пин çын шутланаť.

Корреспондент çапла çирĕплетсе параť: Йапонçăсем Шанъси провинцинче çĕнĕрен тапăнма хатĕрленеççĕ. Йулашки кунсем хушшинче Таййуане тата чукунçул тăрăхĕнчи çывăхри пунктсене 10 пин ытла Йапони салтакĕ йанă.

Шанъдун провинцинче Китай çарĕсем Цзинин хулине çавăрса илеççĕ. Китайăн пĕр отрйачĕ Цзининрен 35 километртра çурçĕреле Вешана йышăнса илнĕ.

Гога правителстви çур мĕлйард лей растратă тунă

ПАРИЖ, февралĕн 14-мĕш. (ТАСС). Политикăпа çыхăнса тăракан çынсем хушшинче çӳрекен хыпарсем тăрăх, халиччен пулнă правителствă—Гитлер агенчĕ Гога правителстви влаçа хăй аллинче тытса тăнă кĕске вăхăтра çур мĕлйард лей укçа-тенкĕ салатса пĕтернĕ. Вăл укçана Чехословаки правителстви стратегилĕ чукунçул линийĕсем тăвас ĕç валъли Румыни банкне хывнă пулнă.

Уйав йачĕпе

Хĕрлĕ Çар 20 çул тултарнă кун Балдайри вăтам шкулта вечер пулаť. Вĕренекенсем вечерта сăвăсем калама вĕренеççĕ. Хор кружокĕ Хĕрлĕ Çар çинчен йурăсем вĕренет.

Хĕрлĕ Çар кунĕ тĕлне Осоавиахим организацин членĕсем 30 ача „Ворошиловский стрелок" значокне илме нормăсем параççĕ.

П. Захаров.

Ответлă редактор ĕçĕсене тăваканĕ И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

Стенографи ĕçне тата машинăпа пичетлеме вĕренмелли курссем çумĕнче

МАШИНĂПА ПИЧЕТЛЕКЕН БӲРО ПУР

Учреждениссенчен тата уйрăм çынсенчен тĕрлĕрен хутсене, ĕçсене пичетлесе пама заказ йышăнаççĕ.

1 сехетпе 3 сехет хушшинче илсе пымала.

Адрес: Шупашкар хули, Роза Лъуксембург урамĕ, тĕп библиотека.

Чăваш АССР Государствă страховани тытăмне

ИНЖЕНЕР йе ТЕХНИК-строител кирлĕ.

ĔÇУКÇИ КИЛĔШӲ ТĂРĂХ.

АДРЕС: Шупашкар, Карл Маркс урамĕ, 12 (картишĕнчен кĕмеле), телефон 1—90 3—1

Академи театрĕнче

Февралĕн 18-мĕшĕнче вырăсла спектаклъ

Шекспир

„ОТЕЛЛО"

Талон № 113

Февралĕн 19-мĕшĕнче

Чăвашсен Государствă Академи Театрĕ 20 çул тултарнă йатпа

ЧАПЛĂ ЛАРУ ПУЛАŤ

Уйрăм панă билетсемпе кӳртеççĕ.

Лару каçхине 6 сехетре пуçланаť.

Йубилей комиççийĕ.

„Чăваш коммунĕ" çырăнса илмелли хакĕ: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайала параççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 86. Гор. Чебоксары. Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 36. Тираж 15.500 26—94 ем 1—1 п. л.